Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТЯБРЬ 6
ЫТЛАРИКУН
206(5019) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 5—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—6—85, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленноç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Сывă пултăр Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш кунĕ!

Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен кунĕ

Пайан ирĕклĕ совет çамрăкĕсем Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен XXIV-мĕш кунне уйавлаççĕ. Кăçалхи çул Пĕтĕм Тĕнчери Çамрăксен кунĕ тĕнчери лару-тăру нихăçанхинчен те ытла йăвăрланса çитнĕ условисенче иртет.

Тĕнче каллех, 1914 çулти пекех, империалисăм вăрçи хăрушлăхĕ умĕнче тăрать. Фашисла провокаторсем урса кайсах вăрçа хатĕрленеççĕ. Çĕр чăмăрĕн виçĕ пайĕнче фашисла агрессăрсем вăрçă вучахне чĕртсе йачĕç. Вăл вăрçа етемлĕхĕн тăваттăмĕш пайне хутшăнтарнă та ĕнтĕ.

Итали фашисĕсене хирĕç çапăçса вăйсăрланнă Абиссини халăхĕ хĕçпăшала пăрахман, вăл халĕ те лайăх хĕçпăшалланнă Муссолини çарĕсене хирĕç кĕрешет. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ республикăлă Испани халăхĕ Италипе Германи интервенчĕсене хирĕç паттăрăн кĕрешет. Республикăлă çар вăйлăн хирĕçнипе тулашса, урса кайнă фашиссем мирлĕ хуласем çине сывлăшран бомбăсем пăрахса, мирлĕ халăха — хĕрарăмсене, ачасене, стариксемпе карчăксене пинĕ-пинĕпе пĕтереççĕ. Германи фашисăмĕ Австрине туртса илчĕ, халĕ Чехословаки çине тапăнма урса кайсах хатĕрленет. Йапони войеншчини Китай халăхĕн йунне тăкать.

Китайпа Испанири вăрçă, вăл тĕнчипех, чăн малтан Совет Союзне хирĕç пулас вăрçăн пуçламĕшĕ. Йапони войеншчини пирĕн социалисăмлă çĕршыв чикки çине тапăнса пăхрĕ. Никам çĕнтерейми вăйлă та паттăр Хĕрлĕ Çар ССР Союзĕн таса çĕрĕ çине тапăннă Йапони самурайĕсене асăнмалăх çапса салатрĕ.

Пĕтĕм тĕнчери ĕççынnисем, çавăн пекех çамрăксем те, фашисăм вĕсем валли мĕн хатĕрленине пĕлеççĕ. Фашисăм вăл—вăрçă, чуралăх, выçлăх, ĕçсĕрлĕх. Фашисăм урса кайсах вăрçа хатĕрленнине хирĕç пĕтĕм тĕнчери ĕççынnисен пĕрлĕх фрончĕ çирĕпленет. Ĕççынnисен нумай йышлă масси мирлĕ пурнăçшăн, демократипе ирĕклĕхшĕн, Совет Союзне сыхласшăн, фашисăмпа вăрçăна хирĕç кĕрешме хăватлăн çĕкленет, пĕрлешет, пролетарилĕ революци йалавне çÿлĕрен те çÿле çĕклет. Çак кĕрешÿре хăватлă та вăйлă, гранит пек çирĕп социалисăмлă державă—ССР Союзĕ пĕтĕм тĕнчери пролетариата çул кăтартса паракан майак выранĕнче тăрать. 170 мĕлйунлă аслă совет халăхĕ пĕрлĕхлĕ, вăл коммуниссен партийĕпе аслă çулпуç Сталин йулташ тавра, Коммунисла Интернационал тавра пĕтĕçсе тăрать.

Пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывра совет гражданинĕ ирĕклĕ çын, вăл пуйан, културăлă, савăнăçлă та телейлĕ пурнăçпа пурăнать. Вăл Сталинла Конституци панă ырлăхпа туллин усă курать. Конституци ăна ĕçлеме, вĕренме, канма, ватăлсан тата чирлесен государствăран пулăшу илме права парать. Совет гражданинĕ—хăйĕн çĕршывĕн хуçи.

Сталин йулташăн сывăх соратникĕ Н. И. Йежов йулташ йертсе пыракан наркомвнуделĕцсем совет халăхĕ тата унăн çамрăк ывăл-хĕрĕсем пулăшнипе, троцкисла-бухаринла бандитсене, шпионсене тата диверсантсене аркатса тăкрĕç, тĕнчери мирпе ирĕклĕхшĕн кĕрешÿ ĕçне вăйлатма, тĕнчери рабочи класăн тата çамрăксен пĕрлĕхне çирĕплетме пулăшрĕç.

Капиталисăмлă çĕршывсенчи çамрăксем вăрçăсемпе пролетарилĕ революци тапхăрĕнче, ССР Союзĕнче социалисăм çĕнтерне тапхăрта, Испанипе Китай халăхĕ паттăр çапăçнă тапхăрта пурăнаççĕ. Ку—çамрăксен ÿссе пыракан революцилĕ йухăмĕшĕн пысăк шкул. Татăклă çапăçусен вăхăчĕ çитсен, Йевропăпа Америкă тата хĕвелтухăç йенчи çĕршывсенчи рабочи çамрăкĕсем хăйсен чăн-чăн сăн-сăпатне кăтартрĕç, вырăс рабочийĕсен çулĕпе кайса, хăйсен аллинчи хĕçпăшалпа капиталисăма пуçĕпех çапса салатĕç.

Совет çамрăкĕсем—тĕнчере чи телейлĕ çамрăксем. Вĕсен ыраш-лăхĕ шанчăклă. Ленин—Сталин партийĕ, аслă çулпуç Сталин йулташ тата пĕтĕм совет халăхĕ телейлĕ çамрăк ывăл хĕрĕсене йуратать, вĕсене шанать. ССР Союзĕн' союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче çамрăксем активлăн ĕçлерĕç. Совет халăхĕ хăйĕн Верховнăй Советне 284 çамрăка суйларĕ. Совет çамрăкĕсем партипе халăх шаннине тивĕçлĕ пуласшăн пĕтĕм чĕререн тăрăшаççĕ; çав шанăçа совет çамрăкĕ пĕтĕм пултарулăхпа тата пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçленипе тÿрре кăларать. Совет çамрăкĕсем индустри гиганчĕсенче, арктикăра, колхозлă йалхуçалăхĕнче, литературăра, искусствăпа наукăра, сывлăшра, çĕр çийĕнче, шыв айĕнче, пĕр сăмахпа каласан, пур çĕрте те Ленин—Сталин партийĕ ĕçĕшĕн чĕререн тăнине, хăйĕн пултарулăхĕпе паттăрлăхне кăтартаççĕ.

Хасан кÿлли районĕнчи çапăçура пирĕн бойец-патриотсем чăннипех тĕлĕнмеле паттăрлăх тĕслĕхĕсене кăтартрĕç. „Сывă пултăр аслă Сталин!" „Социалисăмлă çĕршывшăн!", „Урра!"—тесе кăшкăрса, Йапони самурайĕсене тăван çĕршывран кăларса сирпĕтрĕç. Партире тăман красноармейцăсемпе командирсем çапăçу умĕн „Епĕр вăрçа Ленин—Сталин парти членĕ пулса, Ленинла комсомол членĕ пулса кĕресшĕн", тесе партине тата комсомола илме ыйтса зайавленисем панă.

Йапони самурайĕсем совет çĕрĕ çине тапăннă чухне, пирĕн çĕршыври çамрăк ачасемпе хĕрсен патриотисăмла çĕкленĕвĕ ÿссе кайрĕ. Вĕсен кăмăлĕпе ĕмĕтне Шупашкарти рабочи-стахановĕц К. В. Калинин йулташăн зайавленийĕ лайăх кăтартса парать. „Епĕ хамăн вăй-хал, ăс-тăн çитнĕ таран хамăрăн çĕршыв оборони тĕрекне, Хĕрлĕ Çар тĕрекне ÿстерме, çирĕплетме сăмах паратăп. Епĕ сиртен мана Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтатăп", тет вăл.

Комсомолĕцсем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (болшевиксен) партин тивĕçлĕ ывăл-хĕрĕсем пулма тăрăшаççĕ. Ленин пек, Сталин пек пулар,—çакă вăл кашни совет çамрăкĕн ĕмĕчĕ. Коммуниссен партийĕ çамрăксене ленинла-сталинла идейăлăхпа хĕçпăшаллантарать, тÿрĕ, шиксĕр, хăйулă пулма, тăшмана палласа илме, ăна пĕр хĕрхенмесĕр тĕпренех тăпăлтарса çапса аркатма вĕрентет.

Ленинла-Сталинла комсомол хăйĕн çирĕмçуллăхне хатĕрленет. Уйава чаплăн иртерес майпа, çамрăк патриотсем тăван çĕршыв-аннене пама парнесем хатĕрлеççĕ. Сталин йулташ Иванов йулташ патне çырнă çырура: „ССР Союзĕнчи рабочи клас буржуалă çĕршывсенчи рабочи класпа интернационаллă пролетарилĕ çыхăнса тăрассине вăйлатмала тата тĕреклетмеле; пирĕн çĕршыв çине вăрçăпа тапăнас-мĕн пулсан, буржуалă çĕршывсенчи рабочи клас пирĕн çĕршыври рабочи класа политикăла пулăшассине организацилемеле, çавăнпа пĕр пекех пирĕн çĕршыври рабочи клас буржуалă çĕршывсенчи рабочи класа пур майсемпе те пулăшассине организацилемеле; хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ",—тенĕ.

Сталин йулташ сăмахĕсем комсомолăн, пĕтĕм совет çамрăкĕсен ĕç программи пулса тăраççĕ. Сталин хушнисене пурнăçласси тăван çĕршыва пама хатĕрлекен парнесенчен чи пирвайхи парне пулмала.

Пайан аслă совет халăхĕн телейлĕ çамрăкĕсем хăйсен вăйĕпе хăватне, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тата социалисăмлă тăван çĕршыва пÿрнăçа та шеллемесĕр сыхлассишĕн, унăн хăватне, ырлăхне тата мухтавне тĕреклетессишĕн хатĕр тăнине демонстрацилеççĕ.

Комсомолĕцсемпе комсомолкăсем, Совет Союзĕнчи çамрăксем! Аслă болшевикла парти тавра тачăрах пĕтĕçĕр! Сывă пултăр Марксăн — Енгелсăн — Ленинăн — Сталинăн никам çĕнтерейми йалавĕ!

Хамăрăн пĕтĕм вăйсене, хамăрăн çамрăклăхăн пĕтĕм çулĕсене коммунисăмăн аслă ĕçне парар!

„Ермак" пăр çĕмрен çинчен, 2-IX.38 ç.

Мускав, Кремл.

СТАЛИН йулташа

Хаклă Иосиф Виссарионăвич!

„Ермак" пăрçĕмрен екипажĕ Сире, вăл правителствăн 1938 çулти заданине тултарни çинчен рапăртлама телейлĕ. Арктикă пăрĕсем хушшинче тăвата уйăх хушши пулнă вăхăтра „Ермак" 17 пăрахута пăрсен тыткăнĕнчен çăлса илсе çĕршыва тавăрса пачĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ ĕçлеме те пуçланă ĕнтĕ.

Пайан пирĕн уйрăмăнах савăнăçлă кун. Епĕр çак çулхи питĕ те йăвăр тата ответлă ĕçе туса пĕтертĕмĕр—Центрти полар бассейнĕн çÿлĕ широтисенче нумай уйăхсем хушши пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿренĕ пăрçĕмрен йышши „Малыгин" тата „Садко" пăрахутсене пăрсем хушшинчен илсе тухрăмăр.

Пирĕн тăван коммунисла партипе тата сирĕнпе, Сталин йулташ, хавхаланса епĕр пăрçĕмрене 83 параллел урлă иртертĕмĕр, çак районра халиччен ишсе çÿренĕ мĕн пур карапсенчен те 300 милă çурçĕреле кайса, çÿлĕ широтасенче ирĕклĕн ишессипе тĕнчипе рекорд турăмăр. Çурçĕр тинĕс çулне алла илсе пырса, епĕр, мирлĕ строителствăн задачине пурнăçа кĕртетпĕр. Анчах та тăшман пирĕн теса тăван çĕршыв çине тапăнма хăйсан, епĕр, совет марйакĕсем, кирек хăш вăхăтра та хамăр карапсене çĕршыв хушнă тĕле çавăрма, фашисла тискер кайăксене аркатса тăкмалах çапма хатĕр тăратпăр.

Пăрсем хушшинче куçса çÿрекен йулашки караванти карапсене пăрсем хушшинчен кăларса пĕтерни çинчен сире хĕпĕртесех пĕлтеретпĕр. Хамăрăн аслă тăван çĕршывшăн сирĕн кирек мĕнле заданине те ĕçе кĕртме хатĕр.

Шевелев.

„Ермак" пăрçĕмрен капитанĕ—Сорокин.

Пом. полит—Дйакăв.

Судком председателĕ—Овчинникăв.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕсем—Совет Союзĕн Геройĕсем (сулахайран сылтăмала): полковник А. В. Лапидевский, комбриг М. М. Громăв тата комбриг А. В. Беляков.

Ф. Кислов фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Мускав—Баку—Мускав

Çентаберĕн 3-мĕшĕнче гражданла сывлăш флочĕн лотчици Бережнайа йулташ Мускав—Баку—Мускав маршрутпа вĕçев тунă.

Хăйĕн рейсне Мускавран Бакува тата кайала Бережнайа йулташ тĕрлĕ маршрутсемпе вĕçсе тунă. Мускавран августăн 30-мĕшĕнче 5 сехет те 19 минутран вĕçсе тухса, вăл Сталинграда çул тытнă, кунта вăл анса ларнă. Самолот валли бензин тултарнă хыççăн, Бережнайа йулташ малала вĕçсе кайса 12 сехет те 35 минутра Бакури аеродром çине анса ларнă. Мускавран Бакува çитиччен 2 пин ытла километр хушăна вăл 6 сехет те 20 минут хушшинче вĕçсе тухнă. Сехетри вăтам хăвăртлăх 316 километр пулнă.

Ку рейс вĕçев хăвăртлăхĕпе çĕç мар, вăл Бережнайа йулташ Мускавран Бакува çити Сталинград урлă пĕрре анса ларса тÿрех вĕçме май пуррине кăтартса панипе те уйрăм тăрать. Халхи вĕçев трассипе танлаштарсан, Бережнайа вĕçнĕ трассăпа вĕçме 500 километр çывăхрах.

Бакуран Мускава кайала таврăннă чухне, Бережнайа йулташ Махач-Кала, Минералнийе выды тата Харькăв хулисене анса ларнă. Çак трассăра та вăл сехетре 344 километр ытла хăвăртлăхпа вĕçме пултарнă.

Бережнайа йулташ рейсĕ—сăнав йенĕпе тунă рейс. Ăна „ПС-40" маркăлă почтă самолочĕпе вĕçсе тунă. Тÿтайĕв лотчикĕн йулашки чаплă рейсĕ хыççăн, Бережнайа лотчицăн вĕçевĕ Мускав хулине çĕршывăн пысăк центрĕсемпе, Союзăн айакри республикисен столицисемпе çыхăнтаракан тĕп магистралсем çинче самолотсемпе хăвăрт вĕçессине организацилес ĕçре çĕнĕ малашлăх уçса парать. Çывăх вăхăтсенче Мускавран айакри республикăсен столицисене кайакан почтăна тата хаçатсене хăвăрт вĕçекен самолотсемпе çав куннех кÿрсе пама май пулать.

(ТАСС).

Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ

Çентаберĕн 4-мĕшĕнче Шверник йулташ доклачĕ тăрăх пренисем пынă.

Пренире тухса калакансем Профсойузсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Совечĕн выранти организацисене йертсе пырас ĕçри çитменлĕхĕсем çине, ĕçе сыхласси тата профсойуз кадрĕсене вĕрентессипе вĕсене политикăлă воспитани парасси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхнине кăтартса панă.

Ирхи лару вĕçĕнче Шкирйатăв йулташ пысăк сăмах тухса каланă.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Чехословакири лару-тăру

Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, Чехословаки премйерĕ Годжа çентаберĕн 3-мĕшĕнче парламент фракцийĕн председателĕпе генлейнăвĕц Кундтпа чылай вăхăт хушши каласнă. Кундт правителствин çĕнĕ пройектне (Чехословакине уйрăм облăçсем çине пайласси çинчен) сÿтсе йавма килĕшмен-ха. Анчах вăл правителствă пройекчĕн çĕнĕ текстне пичетлесе кăларнă хыççăн, генлейнăвĕцсен партийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсемпе тухса каласси çинчен „палăртнă".

Çав кунах президент Бенеш лорд Ренсимена каллех тепĕр хут йышăннă. Бенеш патне кайма тухаччен Ренсимен телефон тăрăх лорда Гитлĕр патне кайса килнин резултачĕсем çинчен пĕлтернĕ.

Калаçусене çĕнĕрен пуçласа йама май пур пулин те, Чехословаки обшчĕствĕннăçĕ гитлерăвĕцсен „сĕнĕ" уçăлас умĕнхи тата унта Гитлĕр сăмах тухса калас умĕнхи лару-тăрува çивĕчленсе çитнĕ тесе шутлать. Чехословаки „Лидове Новины" хаçачĕ çапла çырать: „Халхи вăхăтра епĕр чăннипех те чи вĕçне çитсе тăратпăр. Республикăн никама пăхăнманлăхĕпе ăна пĕтĕмĕшпех сыхласа хăварас тесен, унтан кайала чакма йурамасть. Чехословаки мире хăйĕн мĕн пур вăйĕсемпе хÿтлеме хатĕр тăрать, анчах вăл, хăйĕн никама пăхăнманлăхне йулашки майсем пур таранах хÿтлес шутпа кирлĕ ĕçсене пурне те тăвать".

Англи правителствин пичечĕ Чехословакири лару-тăрува питех те хăрушă тесе шутлать. Çак хăрушлăх Германин маневăрсене мобилизацилене çарĕсене салатса йариччен çаплипех йулать. Чехословаки правителствине Гитлĕрăн требованисем тăрăх малашне татах устăпкăсем тутарас шутпа, Англи правителстви ăна хĕсессине вăйлатать. Англи советникĕ лорд Ренсимен Чехословаки призидентне Бенеша Генлейн партийĕ тĕлĕшпе ытларах уступкăсем тăвас позици йышăнма хушнă.

Чехословаки тĕлĕшпе тунă Германи планĕсене Франци пичечĕ çав тери тимлĕн сăнаса пырать, вăл халхи вăхăтра пулса тăнă лару-тăру питех те сивĕчленсе кайнă тесе калать. (ТАСС).

Англи правителстви агрессăрсене çакăн пек хăратать

— Акă епĕ вĕсене халех кăтартăп!..

Дмитрийĕвпа Валк ÿкерчĕкĕ („Пресскл ише")

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра, Цзйанси провинцин çурçĕр пайĕнче, Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕнче йапонĕцсем подкреплевисем илсе, кăнтăр йенеле Цзÿцзйан—Нанчан чукунçулĕ тăрăх наступлени тума пуçланă.

Çавăн пекех йапонĕцсем Нанканрен хĕвеланăçнеле (Цзÿцзйанрен кăнтăр йенеле) пысăк атакăсем тума пуçланă.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕнче вăрçăн тĕп ĕçĕсем Хуанмей хули патне куçнă. Йапонĕцсем Хуанмейран хĕвеланăç йенеле виçĕ колоннăпа наступлени туса пыраççĕ.

Жуйчан районĕнче йапонĕцсем Китай оборонин линине татса кĕме хăтланаççĕ, анчах вĕсен ĕçĕсем ăнăçлă пулмаççĕ. Китай позицисем хуларан виçĕ километрта вырнаçнă. Жуйчавран кăнтăр-хĕвеланăç йенеле йапонĕцсем кайала хытăн чакнă чухне, вĕсен унта вилнисемпе аманнисем пит нумай выртса йулнă. Китайĕцсем нумай танксем, темиçе тупă тата вăрçă хатĕрĕсем туртсе илнĕ.

Анцинран тăварах йапонĕцсем десантсем антарнă, вĕсем Китай позицисем çине темиçе хутчен те йăссăр атакăланă. Анхуей провинцин вăтаçĕр пайĕнче йапонĕцсем Луанрен хĕвеланăç йенеле наступлени тума пуçланă, анчах Жуйчан çывăхĕнче (Луанрен хĕвеланăçнеле) Китай çарĕсем вĕсене наступлени тума чарса лартнă.

(ТАСС).

Йеврейсене варвăрла хĕсĕрлеççĕ

Фашисла Италире, нимĕç гитлерăвĕцĕсен примерĕ тăрăх, йеврейсене урса кайсах хĕсĕрлеççĕ. Çентаберĕн 3-мĕшĕнче правителствă саккун кăларнă. Вăл саккун йеврей ачисене Итали шкулĕсенче—чи кĕçĕн шкултан пуçласа университетсем таранах, çавăн пекех тата уйрăм çынсен алличе тăракан шкулсенче те вĕренме чарать. Çак çулхи октаберĕн 16-мĕшĕнчен пуçласа мĕн пур йеврей преподавателсене ĕçрен кăлармала. Çав кунран пуçласа мĕн пур йеврейсене академисен членĕсен хисепĕнчен, ăслăлăх институчĕсенчен, литературă тата искусствă ассоциацийĕсенчен т. ыт. кăларса пĕтермеле. Ăслăлăх академи членĕсен хисепĕнчен кăлармалли йеврейсем хушшинче пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăракан йатсем пур: Волтеррпа Чивитă математиксем тата ыт. учонăйсем те. Фашисла власçен çĕнĕ саккунĕ тăрăх вĕсене академинчен хăваласа кăлармала.

Италире йеврейсем валли тунă пĕр шкул та çук, Италири фашисла власçене йеврейсене хирĕçле декречĕ йеврейсене Италире вĕренме нимĕн чухлĕ те майсем памасть.

Çак декрета мĕн пур фашисла хаçатсем тĕрлĕрен майĕсемпе мухтама хăтланаççĕ. Анчах „Джорнале д'Италиа" йатлă официаллă хаçат та Италири фашисла правителствăн йеврейсене хирĕç туса иртерекен ĕçĕсем пирки йут çĕршывсенче мĕн калассине кăмăлсăр пулнине пытармасть. Йут çĕршывсенчи чылай паллă пичет оргăнĕсем Муссолинин çак мероприйатине вăтам ĕмĕрсенчи варварствă тесе шутланине хаçат ирĕксĕрех йышăнать.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти вĕренĕвĕнче тĕпрен улшăну тумала

Патăрьел районĕнче парти кружокĕсем 12, вĕсенче 48 коммунист шутланаççĕ. Анчах та иртнĕ уйăхĕнчен пуçласа август уйăхĕн вĕçне çитиччен кружоксем пĕрре те ĕçлемен. Пуçламĕш парторганизацисем, çавăн пекех, райком та парти вĕренĕвне пăхмасăр хăварса тĕллĕшне нимĕн те туман.

Райком инструкторĕсем пурнĕçĕн ытла пăхусăлăх ыйтăвĕсемпе ĕçлеççĕ. Райком хăйĕн инструкторĕсене уйрăм пăлсовесем çумне çирĕплетет, инструкторсем вара пуçламĕш организацисенче, пĕччен коммунистсем патĕнче питех те сахал пулаççĕ. Çавăн пек, Петрова юлташа çуркки вăхăтĕнче Çĕнĕ Ахпÿрт пăлсовĕçĕ çумне çирĕплетнĕ, унта вăл пăлхусăлăх ĕçĕсемпе пĕр уйăх ытла ларса иртернĕ.

1938 çула кĕнĕрепе райком парти пропаганди çинчен хăйĕн ларăвĕсенче пĕтĕмпе 5 хут анчах пăхса тухнă.

Августăн 3-мĕшĕнче пулнă ларура райком чылай кружоксенче занятисем сÿнсе ларнине палăртнă. Кружок ĕçĕсене чĕртсе йăма райком членĕсене кружоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Анчах çак решени те пурнăçа кĕмесĕр юлнă—райком членĕсем вырăнсене тухман, кружоксем ĕçлемĕн, ку ыйту тăрăх йышăннă решени те августăн 28-мĕшне çитиччен райком секретарĕн Вишньов юлташăн сĕтел сунтăхĕнче выртнă.

Кружоксене организацилентĕ чухне коммунистсен пĕлĕвĕ мĕн таран пулнине хисепе илмен. Çавăн пек, Çĕнĕ Ахпÿртре 7—8 çул вĕрениисем те, хутла начар пĕлекенсем те пĕр кружокрах пулнă. Сахалтарах вĕреннĕ юлташсене занятине хатĕрленме пулăшмаççĕ. Чăваш Сăкăт кружокĕнче те ĕçсем çакнашкалах.

Кружоксене организацилентĕ чухне вĕсем вĕренекенсемпĕн çывăхра пулманнине те хисепе илмен. Уйрăм коммунистсен занятине 8—12 километр тарана çÿремеле. Кружока çырăнна юлташсенчен чылайăшĕ занятисене пĕркелĕ çÿремеççĕ. Занятисене пулакансен йышĕ вăтамран та 50—75 процент анчах.

Учебниксем çитменни те вĕренÿ ĕçне йăварлатать. Чăваш Сăкатри кружокра вĕренекен 9 çынтан виççĕшĕн анчах „Наша Родина" кĕнеке пур. Çавăн пекех Çĕнĕ Ахпÿртре те.

Кружоксене çĕ планĕсем çук. Час-часах тата вĕренекенсем занятисене мĕнле çÿренине те тĕплĕн шута илмеççĕ.

Пропагандиссене райком йĕнчен те, парткабинет йĕнчен те кирлĕ пек пулăшса пыни курăнмасть. Кружоксене занятисем начар иртеççĕ. Акă мĕн каласçĕ Сăкăт организацинчи коммунистсем Арсентьевпа Теникăвă юлташсем ку ыйту пирки: „пирĕн занятисем çапла иртеççĕ: кружок руководителĕ Разумăв юлташ пире вĕренмели темă тăрăх кĕнекерен вуласа парать те, унтан епĕр мĕн таран ăнланса юлнине ыйтма пуçлать. Хăй йĕнчен ăнлантарса пани сахал". Çак кружок занятине пĕринче райком секретарĕ Антонăв юлташ пулнă. Вăл Разумăв юлташпа пурнайччен тавлашнă, анчах вĕсем мĕн çинчен тавлашнине вĕренекенсем пĕрре те астумаççĕ.

1938 çулти январьтен пуçласа пропагандиссемпе вĕренекенсем валлĕн çеминарсемпе консультацисем пулман. Парткабинет (кабинет пуçлăхĕ Йакăвлев юлташ) ĕç планĕсĕр ĕçлет. Библиотека час-часах хупă тăрать. Коммунистсем партакабинетри литературăпа çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Райком инструкторĕ Браницын юлташ 1936 çултан пуçласа ку тарана çитсе те партакабинетран икĕ кĕнеке илсе кăна вуланă. Художествăлă литературă çителĕксĕр, уйрăмах—чăвашла кĕнекесем сахал.

Районри хаçат та парти вĕренĕвĕ çинчен сахал çырать. Вăл 1938 çула кĕнĕрепе ку ыйту пирки пурĕ те икĕ хутчен кăна çырнă.

Союзлă республикăсемпе автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ иртнĕ хыççăн райoнра агитаци ĕçĕ те вăйсăрланни сисĕнет. Çавăн пек, Чăваш Сăкăт колхозĕнчи икĕ бригадăра агитаци йĕнĕпе пăртаках ĕçлеççĕ пулсан, ытти бригадăсенче нимĕнле ĕç те курăнмасть. Колхозниксем тĕнчере тата хамăр çĕршыва пулса иртекен ĕçсем çинчен пĕлесшĕн, анчах парти организацийĕ вĕсене ку тĕлĕшпе начар пулăшаççĕ. Августăн 26-мĕшĕнче çак колхозри 5-мĕш бригадăра пулнă бригада пухăвĕнче колхозниксем тÿрех агитаци ĕçне вăйлатма ыйтрĕç.

Августăн 27-мĕшĕнче партоганизации районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Коммунистсем парти райкомĕ вăл пропаганда йĕнĕпе начар ĕçлесе пынăшăн хытă критикнерĕç. Çакăн хыççăн тепĕр кунхех Патăрьелĕнче икĕ кружок тата Çĕнĕ Ахпÿртре Каçалри кружоксем ĕçлеме пуçларĕç. Сăмах та çук, парти райкомĕ çак ĕçе тивĕçлипе тытăнсан, парти вĕренĕвĕ кирлĕ пек пулса пыма пултарать.

Григорьев,
ПСК(б)П Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн инструкторĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Сентябрĕн 4 — 5-мĕшĕсенче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене пăхса тухрĕ: 1) Организацилле ыйтусем, 2) Коммуналлă çуртсен тата капиталлăх строительствă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен.

Пленум, малтанхи ыйту тăрăх ПСК(б)П Обком бÿрове партирен кăларнă буржуйла националиста Ф. И. Матвеевăна ПСК(б)П Хула комитет пленум членĕсен составĕнчен кăларчĕ.

Иккĕмĕш ыйту тăрăх пленум Калининăпа Йатмасăв юлташсен докладĕсене итлесе, коммуналлă çуртсен строительстви капиталлă строительствă ĕçĕсене вăйлатас тĕлĕшпе практикăла решенисем йышăнчĕ.

Парти активĕпе агитатăрсен çеминарĕ пулса иртрĕ

ПСК(б)П Шăнкăртам райкомĕ, СССР Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн материалĕсемпе вăл йышăннă саккунсене тĕплĕн вĕренсе, колхозниксене лайăх ăнлантарса парас тĕллевпе районри парти активĕпе агитатăрсен виççĕ кунлăх çеминарне туса иртерчĕ. Çеминара райком секретарĕсем иртерчĕç.

Районри парти активĕпе агитатăрсем Çессия материалĕсемпе Çесси йышăнна саккунсем çинчен колхозниксене çĕçцинанн ăнлантарса пама йăлемпе колхозсене тухса кайрĕç.

Йалти агитатăрсем валлĕн уйрăм кружоксем пулаççĕ, унта 7-шер занятие иртерме палăртнă.

Колхозсене Çесси материалĕсене вĕренме кружоксем организацилеççĕ.

А. Кужинкăв.

Агитатăр Йефимăв

Кăшаркассинчи „Пионер" колхозри (Çĕрпÿ р-нĕ) пур бригадăсенче те ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăнна саккунсене ăнлантарас ĕç пырать. Агитатăр П. Йефимăв колхозниксем авăн çапнă çĕре кайса, саккунсем çинчен ăнлантарса парать.

Колхозниксем уйрăмăнах, йединоличниксем лашисем çине налог хурасси çинчен йышăнна саккуна ырлаççĕ.

А. Иванов.

Шкулсем вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче

Районри учительсем канашлăвĕсенче учительсен çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе çитнине кĕтсе илме пулчĕç. Чăнах, та вĕренÿ çулĕн малтанхи кунне нумай шкулсенче лайăх иртерчĕç. Вĕренÿ çулне шкулсем мĕнле хатĕрленсе çитни çентябрĕн 1-мĕшĕнче аван курăнчĕ. Акă Иуртакассинчи (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) пуçламĕш шкулти учительсем праçник тумĕпе тумланнă ачасене хирĕç тухса, хавасланса кĕтсе илеççĕ. Классене кĕресенех ачасен куç умĕнче—таса пулма, отличнă вĕренме чĕнекен лозунгсем, портретсем. Çтена çумĕнче расписани çакăнса тăрать. Сĕтел çинче тетрачĕсем, кăранташсем —хатĕрлесе хунă. Учительсем урока лайăх хатĕрленнĕ. Çавăн пекех вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕ Шуршăлти туллимар вăтам шкулĕпе Хуракассинчи вăтам шкулта та аван иртнĕ.

Вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕнче чылай шкулсенче çитменлĕхсем палăрчĕç. Хăшпĕр шкул заведующийĕсем пĕчĕк ремонтсем çине çавăрна пăхман пулнă. Йакимвăри (Шупашкар р-нĕ) туллимар вăтам шкулта ремонт ĕçне пĕтермен. Классене илемлетмен. Унта иртнĕ вĕренÿ çулĕнчи расписанисем çакăнса тăраççĕ. Акулĕвăри вăтам шкулта ачасем пуçтарăннă, анчах учительсем çитеймен.

Кĕçĕн Камай (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) пуçламĕш шкул ремонт ĕçне пĕтермен. Çентябрĕн 1-мĕшĕнче 10 сехет çитрĕ, партăсем çук. Вĕсене тултан ачасем иле-иле кĕчĕç. Расписание хатĕрлемен. Урок планĕсем çук.

Çавăн пекех малтанхи куна Пĕрремĕш Чурашри туллимар вăтам шкул та аран-аран иртерчĕ. Вĕренÿ çулĕ пуçланнă, шкулăн директорĕпе вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ çук. Расписани пĕр кунлăх кăна тунă. Пĕрремĕш класра пĕр сехетсем анчах вĕрентнĕ. Ку шкулта учительсем кĕркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевне хăварнă ачасемпе те ĕçлемен. Çавна пула та ачасем малалли классене куçайман. Каначурари (Шупашкар р-нĕ) туллимар вăтам шкул та вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илеймен. Ремонт пĕтмен. Шкулăн 1 клобус пулнă, ăна та пулин тирпейлĕ тытакалама пирки çĕмĕрнĕ. Историпе вĕрентме учитель çитмест. Шкула 56 ача пымарĕç. Директăр каланă тăрăх, кĕркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевне 10 ача хăварнă. Вĕсенчен 6 шĕ тĕрĕслÿре пулса малалли классене куçнă, 4-шне çав класснехех хăварнă. Çентябрĕн 1-мĕшĕнче виççĕмĕш класра вĕренекенсем пĕри кĕнекесем илме Шупашкар хулине кайнă. Илсе кунă тетрачĕсене ачасене паман. Çавăнпа та иккĕмĕш класра арифметика урокĕ çук 17 ачаран 7—8 ача анчах хут тăткĕсем çинче çыркаларĕç. Протопопихăри туллимар вăтам шкулта урокмсем пĕтсен, таса тумланнă ачасене учительсем кирпĕч йăттарнă.

Ачасем шкула йĕркелĕ çÿресси учительсенчен анчах килмест. Ачасен ашшĕ-амăшĕсенчен те нумай килет. Хăшпĕр ача ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене шкула йамасăр тăнисем те пур-ха. Сăмахран, Каррачурари шкулта 7-мĕш класра вĕренекен Ив. Кандикăва ашшĕ çентябрĕн 1-мĕшĕнче вăрмана ĕçлеме илсе кайнă.

П. Данилăв.

Малтанхи утăмсем хăйулă та тĕрĕс утăмсем пулччăр

Пĕчĕкçĕ ачана, детсада йама вăхăт çиттечченхех тейĕпĕр, шĕвĕртмен кăранташ парсан та, вăл хăйĕнчен аслисем çырнă пек хут çине çырма хăтланать. Пĕрпурне çырса пăхать—йĕр пулмаст, тепринпе—каллех... Кăранташа шĕвĕртсе кăна пар—ĕç тухрĕ те.

Пайан тин класа кĕрсе ларнă ачасен псинкка уралла. Вĕсем шĕвĕртмен кăранташ çырас çуккине ăнланаççĕ, анчах вĕсĕм пĕлменни, пĕчĕк йапаласенех ăнланмани питех те нумай-ха. Çавăнпа та, пайан тин класа пынă ачасене пĕлтерме класси. вĕсене вĕрентес ĕçе мĕнрен тытăнасси, учительсемпĕн питех те ответлă ĕç пулса тăрать. Педагогикăлă ăсталăх кунта чи кирлĕ вырăнта.

Анчах шкулсенче час-часах акă мĕн тĕл пулатăн: пĕрремĕш класра ĕçлекен учительсем (уйрăмăнах çамрăккисем) малтанхи урoксем çине ытла та çиеллен пăхаççĕ. Хăш-пĕрисем тата ĕçе мĕнрен тытăнмалине те пĕлмеççĕ. Акă пĕр факт ĕçе кăтартăпăр. Ку ĕç çентябрĕн 1-мĕш кунĕнче Чăваш Сурăмри (Елĕк р-нĕ) туллимар вăтам шкулта пулса иртрĕ. Çамрăк учительницă тин çĕç шкула пынă ачасене ыйтăва илнĕ. Партăсем хушшинче ларакан ачасенчен пĕр-пĕрин çине шăтарас пек пăхаççĕ. Пĕри, кĕвел пек сарă çÿçĕскер, шкула кайăс хаваслăхпа ирех учителнице ытаран пулмала, —çывăрса ларать. Учительница калать: „шкулта çывăрса лармаламаст"—тет. Ачасем пурте çывăракан ача йĕнеле çавăрăна пăхаççĕ. Унтан: „шкулта мĕнле лармала-ха?", тесе ыйтать ача. Ачасем: „тÿрĕ лармала" теççĕ, сарă çÿçлĕ сапликех çывăрать-ха. Малала учительницă çырнă чух мĕнле ларасси çинчен кÿçрĕ.

—Çырнă чухне урасене урайне хытă тапса лармала,—тет вăл. Ачасем учительница хушнă пек тума хăтланчĕç. Анчах вĕсен нумайăшĕн урисем çĕре çитмеççĕ. Партăсем виçелĕ мар иккен, ытла та çÿллĕ. Час-часах пирĕн учительсем çакăн пек „пĕчĕк" йапаласене шута илмеççĕ.

Çамрăк учительницă малтанхи урока йĕркелĕ иртереймерĕ. Вăл пĕр урокрах темиçе елемент çине куçса кĕрсе кайрĕ. Çапла тунă ачасене пăтраштарса ярать. Вĕсене шкулти йĕркесем çинчен тивĕçлĕ ăнлану парасшăн, уралла каласан сапалантарать. Çакă ĕнтĕ малашнехи утăмсемшĕн те синĕнлĕ пулма пултарать.

Пĕрремĕш класра вĕренес ĕç пехалăхĕ çине малтанхи вăхăтсенче уйрăмăн тимлĕн çавăрса пăхмала. Пĕрремĕш классенче вĕрентекен çамрăк учительсене методи йĕнчен мĕн вăл çитнĕ таран пулăшса пымала. Тин вĕренме тытăннă ачасен малтанхи утăмсемех тĕрĕс те хăйулă утăмсем пулччăр.

А. Б.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх умĕн

Рабочисемпе инженерла-техникла работниксен канашлăвĕ

ПĔРРЕМĔШ УЧАСТКĂ. (Хамăр корр.). Сентябрĕн 4-мĕшĕнче участокри рабочисен тата инженерсемпе техниксен производствăла-техникăла канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу пĕр ыйту: чукунçул строительствинче сентябрĕн 10-мĕшĕнче пуçланакан стахановла çирĕмкунлăха хатĕрленсе иртересси çинчен сÿтсе явнă.

Пĕрремĕш участка строительствă ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнат. Вăл участкан кăçал 14 00 пин тенкĕлĕх ĕçсем тумала. Анчах ку тарана çитиччен стройка ĕçĕсене 473 пин тенкĕлĕх ĕçсем тунă. Вăл участкăри ĕçсене çирĕп йĕрке тăрăх организацилемеймен. Акă ĕç вăйĕ ытлашши ирлер. Участка руководителĕсем йаланах ĕç вăйĕ çитменни пирки калаççĕ. Анчах участкăра пур вăйпа та тулли усă курмаççĕ. Пĕр рабочи пуçне вăтамран 48 тенкĕлĕх ĕçсем тумала пулсан, 31 тенкĕлĕх çеç тунă. Ку ĕнтĕ ĕç вăйĕпе усă курас йĕнĕпе ĕçлеменни çинчен калать.

Стахановла йухăмпа социалисăмлă ăмăрту çине çăмăллăн пăхни çинчен калакан фактсем те сахал мар. Стахановецсен ĕçĕсене шута илесс организацилемен. Вĕсен ĕçĕсем çинчен ытти рабочисене хушшинче ăнлантарман. Культурăлă-массăллă ĕç хăй тĕллĕн кăна пулса пырать. Парти организацийĕ те, профсоюз организацийĕ те рабочисен хушшинче массăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшре тимлĕ ĕçлемен. Вăл çакăнтан та лайăх курăнат: участкă Шупашкартан виçĕ километра кăна ларать пулин те, унта республикăри тухăкăн хаçат-журналсем икĕ-виçĕ кунран çеç çитнĕ.

Участокри ĕçе çирĕп йĕрке тăрăх организацилесен, работниксен хушшинче дисциплинăна çирĕплетсен тата стахановла йухăма вăйлатсан плана ăнăçлăн тултарма пур кирлĕ условисем те пур. Ун çинчен канашлура туха калакансем те тĕплĕн кăтартса пачĕç.

— Епĕр строительствă пĕтмĕченех стройкăра йулма пултарăпăр,—тет çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен бригадир Устинăвичч юлташ,—плана йаланах тултарса пыма пултарăпăр. Анчах пире инженерлă-техникăлă работниксен йĕнчен пулăшни кирлĕ. Ку таранччен вĕсем пире çителĕклĕ пулăшман, вĕрентмен. Стахановла çирĕмкунлăх тапхăрĕнче тĕлĕсĕр ĕçлесси пулмалла мар. Кашни рабочи хăй ĕнер мĕн ĕçлени çинчен тата мĕн тăван ĕçлĕ, мĕн ĕçлесси çинчен пĕлсе тăтăр. Апла тума нарйадсем вăхăтра çитни кирлĕ.

— Материалсем çителĕклĕ, рабочисем те тăршса ĕçлеççĕ. Анчах вĕсене организацилессе пырăкан çук,— тет камĕншчик Кузнецов юлташ,—Ейер епĕ виçĕ вырăнта ĕçлерĕм. Мĕншĕн апла пулчĕ? Мĕншĕн тесен мана ирхинех мĕнле ĕçсем тумали çинчен тĕплĕн каласа памарĕç. Çапла нумай çĕрте куçса çÿренĕ пирки манăн ĕç тухăçлăхĕ те чакрĕ. Нормăна 160 процент çеç тултартăм.

Стахановла çирĕмкунлăх тапхăрĕнче пĕрремĕш участкă умĕнче тăракан ответлă задачăсем вĕсем—шыв паракан станцăна тата пурăнмали суртсене тăвас плана тултарса çитересси пулать. Вăйсене чи пирвайăх çавсене тăвасси çине хумала.

Канашлура пулнă строймастăрсем, бригадирсем пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç. Вĕсен пуçарăвне халех çĕклесе участкари пур рабочисене те ăмăртăва йăвăçтармала. Стахановла çирĕмкунлăха хатĕрленес тата ăна иртерес ĕçĕн тĕп никĕсне социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма хумала.

Комсомолецсем чукунçул строительствинĕ

ИШЛЕЙ. Районри комсомолецсем чукунçул строительствинче стахановла çирĕмкунлăх иртересси çинчен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б) Парти Обком бÿрови йышăннине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Колхозсенчи комсомолецсем чукунçул строительствинче ĕçлеме кайма тăтăнчĕç. Йулашки икĕ-виçĕ кун хушшинче Васнякасси, Мамăш, Анаткас, Шетмĕ тата ытти колхозсенчен 30 комсомолец чукунçул строительствине тухнă.

Комсомолăн районри комитечĕ чукунçул çинче ĕçлеме тухакан комсомолецсем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пыма 14 комсомолецă уйăрнă. ĕçлеме массăлăн тухма пуçларĕç. Иккассинчи пуçламĕш комсомол организацийĕ 7 комсомолецран бригада организацилесе тухнă. Бригадăна комсорг Йефремăв юлташ йертсе пырать. Çавнашкалах Шурка йалĕнчи комсомолецсем 11 çынтан бригада организацилесе тухнă. Пайан куна районри комсомолецсенчен 80 çын ытла чукунçул строительствине ĕçлеççĕ.

Михайлăв.

КÿКЕÇ. Колхозсенчи комсомолецсем чукунçул строительствинче ĕçлеме массăлăн тухма пуçларĕç.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче комсомол райкомĕ строительствăра ĕçлекен комсомолецсем хушшинче политикăлă массăлă ĕçе туса пыма 5 çын йачĕ. Вĕсем бригадăсенче хаçат-журналсем вуласене тата ытти культурăлă ĕçсене туса пыраççĕ. Вĕсемсĕр пуçне строительствăра культработниксем ĕçлеççĕ.

Сперанский.

Халăх тумали ĕç

Ку таринччен линни çине сармали хăйăра Кĕçĕн Çавал шывĕ хĕрринчи карьертан илнĕ. Халĕ Шупашкар çывăхĕнчи линни çине хăйăр сарма пуçлана хыççăн вăл карьер çителĕклĕ хăйăр пама пултараймасть. Çавна пула хăйăр турттаракан пуйăссем нумай вăхăт хушшинче кăна çаврăнса çитме пултараççĕ.

Мăн Çавал шывĕ хĕрринче çĕнĕрен карьер уçасси çинчен ыйту пуçарнăранпа чылай вăхăт иртнĕ. Анчах ыйтăва татса паман-ха.

М. Т.

Халăх переписне хатĕрленни

ЙĔПРЕÇ. Районĕпе илсен переписне иртермели пунктсем 3 çĕрте пулмала: Йĕпрес посолокĕнче, Çĕнĕ Чурашра, Çĕнĕ Мăратра. Кунсăр пуçне районра (пульницăсенче, амбулаторисенче, ача çуратмали суртсенче, чукунçул станцинче счетчиксен участокĕсем 15 пулаççĕ. Районĕпе контролĕр-инструктăрсем — 20, счетчиксем 100 çын ĕçлемеле. Вĕсемсĕр пуçне кашни перепис пункчĕ çумне контролĕр-инструктăрсем виçĕ çынтан кайа мар, счотчиксем 30 процентран кайа мар уйăраççĕ.

Халăх переписне иртерес ĕçре ĕçлеме кадрсем тупса çитересси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шкулсемпе предприятисемпе учрежденисен çумĕнче 5—9 сынран комиссисем организацилени. Вăл комиссисене переписне иртерме кадр суйласа илессипе ĕçлеççĕ.

Хурамалти вăтам шкулти учитель Д. Халапсин юлташ переписне хутшăнса ĕçлеме килĕшсе, заявлени çырса панă. Çавăн пекех райĕçтăвкомри комсомолец Самсонăв юлташ та перепис иртерес çĕрте ĕçлесшĕн.

— Переписе хутшăнса ĕçлесси ответлă та чыслă ĕç. Епĕ вăл ĕçе хутшăнса, хамăн участокри переписе „отличнă" иртерĕп,— тет Самсонăв юлташ.

Д. М-в.

Йединоличниксем колхоза кĕреççĕ

ТРАК. Тĕрер йалĕнчи активиксем халăх хушшинче СССР Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăнна саккунсене ăнлантарса параççĕ. Йединоличниксем хушшинче патăрласа „Уйрăм хуçалăхсен лашисем çине государства налогне хурасси çинчен" йышăнна саккуна тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн, йединоличник Н Йакаăвпа „Буйга" колхоза кĕчĕç. Колхоза кĕнĕ йединоличниксем лашашăн налог тÿлессинчен хăтăлаççĕ.

Е. Терентьев.

КОЛХОЗСЕНЧЕ ТУПĂШЛĂ САТСЕМ ПУЛМАЛА

Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче Чăваш Республикинче сатпахчисен лаптăкĕ 3 хут ÿсрĕ.

Йулхавлă патша саманн вăхăтĕнче виçăсăн та нимĕн те ÿсмен вырăнсенче халĕ çĕршер колхоз сачĕсем сарăлнă.

Вĕсенчен нумайĕшĕ йнуль тата август уйăхĕсем кунĕсенче чей çырлисен, сливăсен, грушăсемпе панулмисен йăмăх хĕрлĕ çăмăсемпе çиççе тăраççĕ.

Халăхăн ирсĕр тăшманĕсем сат ĕçĕ çине хăйсен тасамар аллисене хуман пулсан, çитĕнÿсем татах ытларах пулнă пулăччĕ.

Халăх тăшманĕсем çĕнĕ сатсем лартмали плансене ытлашши пысăк тунă, вĕсем колхозсен укçа-тенкĕ çитти-çитменнипе, йăвасçен пурри-çуккипе те шута илмен, вĕсем сатсене начар пăхалăхлă йăвасçен, сахал тупăш паракан йă пачах çимĕсçсен туман улма-çырла йăвасçен лартса сăтăрланă. „Наукăпа-техникăн йулашки çитĕнĕвĕсене" çĕкĕ кĕртен пекки туса, халăх тăшманĕсем питомниксенче хăйсен сăтăрла ĕçĕсене тунă.

Пирĕн республикăри Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн малтанхи руководстви сатçăсем каланине пăснă, йалти работниксен шухăшĕсем çине ирсĕрĕн пăхнă. Халăх Комиссарĕн Совечĕн кивĕ руководстви районсенче сат ĕçне тимлĕн çинчен отчетсем темиçе хут тыйанне илмен, вĕсем колхозсене уйрăммăн пĕрре те илтмен.

Ĕç çине çавăн пек пăхнипе чылай районри колхозсем ĕç çине ответлăра пăхасси пулканлă.

Партипе совет органĕсем йертсе пынипе колхозсемпе колхозниксем тăшманла махинацисене тупса пăлăртрĕç, халăх тăшманĕсене питомниксенчен, пысăк çитĕнÿсен тума пултарчĕç. Йулашки сулсенчи пысăк çитĕнÿсем—государства тата колхоз питомникĕсем тунă пулса тăрать, вĕсемсĕр сат ĕçне сарма май çук.

Йулашки икĕ çул хушшинче вăл питомниксенче 500 пин ытла йăвăçа чи лайăх суртсене сыпнă.

Сат ĕçĕнчи стахановецсем кăрĕсем ÿсрĕç. Вĕсем ĕçĕн çулĕ образецĕсене кăтартрĕç тата сатсене кашни çулах çимĕçсем илме май çук текен çĕрĕк „теорине" çĕмĕрсе тăкрĕç.

Йетĕрне районĕнчи „Новый путь" колхозри Петрухин И И 6 çул хушши ĕнтĕ кашни çулах пысăк тухăçлă панулми туса илет. Çавăн пекех Улатăр районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем, Шупашкар районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхоза, Шăхасан, Йетĕрне районĕсенчи Киров йачĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсем те ĕçĕн лайăх образецĕсене кăтартаççĕ.

Шупашкар районĕнчи Молăтăв йачĕпе тăракан колхозра 1936 çулта пĕр гектартан 35 центнер панулми, 1937 çулта 38,9 центнер, 1938 çулта 100—110 центнер илнĕ.

Çапла çулĕ агротехникăла тата ĕçĕн стахановла меслечĕсемпе усă курса колхозсемпе колхозниксем çимĕçсене социалисăмлă уйхире çеç мар, колхоз производствин мĕн, пур отраслисенче те ÿстереççĕ.

Молăтăв йачĕпе тăракан колхозăра панулми сутса 40 пин тенкĕрен кайа мар тупăш илнĕ. Кашни ĕç кунĕ пуçне 2 тенкĕрен кайа мар укçа тата 200—300 шер грам панулми параççĕ.

Молăтăв йачĕпе тăракан колхозри кашни колхозник, ытти колхозсенчи пиншер колхозниксем пекех тырă, какай çеç мар, пахча çимĕçĕ, сат çимĕçĕ тата пыл çителĕклĕ те ытлашшипех илеççĕ.

Колхозсене тата çырла пахчисене кĕркунне лартса хăварас ĕç çывхарать. Колхозсемпе колхозниксен 800 ытла гектар çине, сатсем лартса хăвармала. Ку ĕçе çÿлĕ агротехникăла тумала. Ăна сат ĕçĕнчи сăтăрлăх йулашкисене тăтăклă пĕтерес ĕçпе çыхăнса иртермеле.

Пирĕн сатсем пурнăçпа те лайăхрах, пурнăçпа те илемлĕрех, пурнăçпа те тухăçлăрах пулмалла.

Сатсемпе çырла пахчисене лартнă чухне агротехникăн йăвăç çитмелли хатĕрлемеле (тăрăн сухаласси, йăвăç лартмали шăтăксем чавасси, шертĕçсем лартасси) пурне те çирĕппĕн пурнăçа кĕртмеле.

Сатсене лартнă чухне, çавнашкалах малтан лартнă сатсене те çырлан хутмалкисем нимĕн те çук пулсан, çулсен çимĕçсем хутлекен йăвăçсенчен лартмалла.

Сатăн пĕрремĕш речĕсене çил-тен хÿтлекен йăвăçсенчен 18—20 метртан айăкарах лартмала.

Лартнă чухне ретсен хушшисем 1,5—2 метр, ретре 0,75—1 метр пулмала. Малала вара йăвăçсен чĕрелнĕ çемĕн сайралатмала. Çĕнĕ сат лартмали вырăна карта тытмала.

Çамрăк сатсем пур колхозсенче вĕсене аслатма шутлаççĕ пулсан, ун малтан сата йусамала.

Панулмисене грушă вăрлăх сачĕсене лартнă чухне икĕ çулхи пĕрпек йăвăçсене çеç лартмала. Сат лартас ĕçе йертсе пыракансен (бригадирсен, правлени членĕсен) çенла асра тытмала—вĕсен лартмали йăвăçсене илнĕ чухне йăвăç паракан хуçалăхран сурт сенрĕте илмелле.

Колхозсенчи сатсене аслатса, çĕнĕ сатсем лартса, çĕрĕç органĕсен, колхоз правленисен, колхозниксен, рабочисен тата служащисен хăйсен кил вырăнĕнчи çимĕç сачĕсем лартас тĕлĕшĕн пулăшнине нимĕн çухатмаллă мар.

Райçĕрĕç пайĕсене вĕсен агрономĕсен сат ĕçне малашне аслатассине 100-шер çĕнĕ колхозсене 1939-мĕш çулти çулти августăн 1-мĕшĕнче ВСХВ Пĕтĕм Союзри Пăлхуçалăх Выставкине хутшăнма права илмеле туса организацилемелле.

Осипăв,
ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн садовод-агрономĕ.

Хамӑрӑн пӗтӗм вӑйсене, хамӑр ҫамрӑклӑхӑн пӗтӗм ҫулӑмне коммунисӑмӑн аслӑ ӗҫне парар!

Ҫамрӑксен савӑнӑҫлӑ уйавӗ

Пайан Пӗтӗм Тӗнчери Ҫамрӑксен XXIV-мӗш кунӗ. Ку кун аслӑ Совет ҫӗршывӗнчи ҫамрӑксен савӑнӑҫлӑ та хаваслӑ уйав кунӗ пулса тӑрат. Пӗтӗм ӗҫҫамрӑкӗсем пайан хӑйсем социалисӑм строительствинче активлӑн хутшӑнса ӗҫлесе тунӑ итогсемпе савӑнаҫҫӗ.

Пирӗн республикӑри ҫамрӑксен те мӗнпе савӑнмали пур. Ҫамрӑксен ретӗнчен государствӑ ӗҫӗнче ӗҫлекенсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Комсомол вӗрентсе ӳстернӗ ҫамрӑксенчен 3 ҫын ССРС Верховнӑй Совечӗн депутачӗсем, пӗр ҫын РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ тата 15 ҫын Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗсем. Вӗсен хисепӗнче 12 ҫын хӗрарӑмсем.

Республикӑри ҫамрӑксем Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ йачӗпе пыракан социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва активлӑн хутшӑнса ӗҫленипе, кунсерен ӳсӗмсем туса пыраҫҫӗ. Куславкка комбинатӗнчи стахановкӑ, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Фирсӑвӑ йулташ нормӑна 200 процентран кайа мар тултарса пыма тата 3 оборонӑ значокӗ илме сӑмах панине ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырат. Ийуль уйӑхӗнче вӑл нормӑна 174 процент тултарнӑ пулсан, августӑн малтанхи вунӑ кун хушшинче 420 процент тултарнӑ. Халӗ вӑл сменӑ маҫтӑрӗ пулса ӗҫлет.

Патӑрйел МТС-чи тракторис Михаил Быкӑв ҫулталӑкри плана 200 процент тултарма пулнӑ. Пайанхи куна 135 процент тултарнӑ та ӗнтӗ. Вӑл 724 килограм ҫунтармали йапаласем перекетленӗ. Шӑхасан МТС-чи комбайнеркӑ Варвара Васильйӗвӑ йулташ ҫулталӑкри плана 133 процент тултарнӑ. Шахасан районӗнчи „Правда" колхозри Константинӑв йулташ тырпулсене пуҫтарса кӗнӗ вӑхӑтра кулленхи нормӑна 130—150 процент тултарса пынӑ.

Предприйатисенчи, колхозсенчи комсомолӗҫсемпе ҫамрӑксем общӗствӑлӑ ӗҫсене активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем физкультурӑ, Осоавиахим ӗҫӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Тутаркас районӗнчи „Малала" колхоз ҫумӗнчи комсомол организицийӗ ҫамрӑксем хушшинче ҫар ӗҫне вӗренессине лайӑх организациленӗ. Унта кашни ҫулах хӗллехи вӑхӑтра вӗренӳ сборӗсем, ҫуллахи вӑхӑтра лагӗрсем туса иртереҫҫӗ. Кӑҫал лагӗр организацилесе 47 ҫамрӑка 120 сехетлӗ программӑпа вӗрентсе кӑларнӑ. Унти комсомолӗҫсем пурте оборонӑ значокӗсем илме нормӑсем панӑ. 5 комсомолӗҫӑн противогазсем пур.

Комсомолӗҫсем хӑйсен политикӑлӑ пӗлӳне тата культурӑлӑхне ӳстерсех пырса ПСК(б) Парти ретне кӗме хатӗрленеҫҫӗ. ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗ партине илме пуҫласси ҫинчен постановлени кӑларнӑранпа пирӗн республикӑри комсомолӗҫсенчен 1280 ҫын комсомол организацисенчен парти ретне кӗме рекомендацисем илнӗ. Парти ретне хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ комсомолӗҫсем кӗреҫҫӗ. Канашри вакунсем йусакан савӑтри паллӑ стахановкӑ, РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Йекатеринӑ Антонӑвӑ, Канашпа Шупашкар чукунҫул строительствинчи стахановкӑ Клинӑвӑ т. ыт. йулташсем парти кандитатне кӗнӗ.

Комсомол организацисем комсомолта тӑман ҫамрӑксемпе таччӑн ҫыхӑнса тӑрса, вӗсем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ агитаци ӗҫне туса пыраҫҫӗ. Ҫавна пула комсомол ретне кунсерен нумай ҫамрӑксем хутшӑнаҫҫӗ. Пӗтӗм Тӗнчери Ҫамрӑксен XXIV-мӗш кунне комсомолӑн пирӗн республикри организацийӗ 31 пин ҫынлӑ отрйадпа кӗтсе илет. Комсомолӑн облӑҫри XIV конференци тӗлне пирӗн республикӑра 19824 комсомолӗҫ; вӑл шутра 4513 хӗрарӑм пулнӑ. Пайанхи куна пирӗн республикӑри организацисенче 31500 комсомолӗҫ, вӑл шутра хӗрарӑмсем 7450 ҫын. Комсомол ретне малта пыракан ҫамрӑксем кӗреҫҫӗ.

ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ҫентаберӗн 15-мӗшӗнчен пуҫласа нойаберӗн 1-мӗшӗччен комсомолӑн пуҫламӗш организацисенче суйлав иртермеле. Ҫак суйлавра комсомол организацисене йертсе пырас ӗҫе хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ комсомолӗҫсене суйламала. Комсомолӑн хисеплӗ задачи—суйлава ҫамрӑксене парас ӗҫе вӑйлатнипе ҫыхӑнтарса иртересси.

Суйлава лайӑх иртерни комсомол организацисене татах та вӑйлатма пулӑшӗ. П. Петильникӑв.

Ҫамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери XXIV-мӗш кунӗ Шупашкарта мӗнле иртет

Ҫамрӑксен Пӗтӗм Тӗнчери XXIV-мӗш кунне республикӑ столицинчи ҫамрӑксем хаваслӑн хатӗрленсе кӗтсе илчӗҫ. Комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗсенче пуринче те комсомолӗҫсемпе союзра тӑман ҫамрӑксен пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. Вӑл пухусенче докладсем итленӗ.

Ӗнер, ҫентаберӗн 5-мӗшӗнче, строительсен клубӗнче ҫамрӑксен XXIV-мӗш кунӗ йачӗпе чаплӑ лару пулчӗ. Унта хулари комсомол активӗ пухӑннӑ. Обком секретарӗ Арзамасцӗв йул. доклад турӗ.

Пайан кӑнтӑрла 12 сехетре Хӗрлӗ плошчӗтре митинг пулат. Митинг хыҫҫӑн парад тата физкультурниксен выступленийӗ пулса иртет.

Каҫхине Крупскайа йачӗпе тӑракан сатра концерт тата массӑлӑ гульанисем пулаҫҫӗ.

Томски чукунҫулӗн Алейски дистанцийӗнче ӗҫлекен рабочисен ачисене, рельс йӗркелӗ пулман пирки пойӑса крушени пуласран хӑтарнӑшӑн, Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ Л. М. Каганович йулташ хаклӑ парнесем панӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: (сулахайран сылтӑмала). Ленӑ Никифӑрӑвӑ, Пашӑ Парадин тата Пашӑ Головийӗва хӑйсене парнесем пани ҫинчен „Железнодорожник Кузбасса" хаҫатра кӑларнӑ приказа вулаҫҫӗ.

С. Чирешкин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Колхоз ҫамрӑкӗсем

Туҫи Мӑратри (Вӑрнар р.) „Клевӗр" колхоз уйри тырпулсене тӑкакламасӑр, кӗске срукра пуҫтарса кӗчӗ. Ку ӗҫре колхоз ҫамрӑкӗсем хастарлӑн ӗҫлесе пычӗҫ. Уйхир ӗҫӗ пынӑ чухне колхозра столовӑй, ачасен йасли ӗҫлерӗ. Кашни бригадӑра ӗҫ вӑйне тӗрӗс вырнаҫтарса тухнӑ. Колхоз ҫамрӑкӗсем тата ватӑ колхозниксемпе колхозницӑсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртрӗҫ. Ҫапла ӗҫленипе кӑна колхоз кӑҫал уйхир ӗҫне ӑнӑҫлӑн вӗҫлесе пырат.

Бригадӑсенчи стена хаҫачӗсем те вӑлӑн пулӑшса пычӗҫ. Редакторсенчен М. Илларионӑв комсомолӗҫ тӑрӑшса ӗҫленине палӑртса хӑварма кирлӗ. Вӑл бригадӑн стена хаҫатне йӗркелӗн кӑларса тӑнӑ. Хаҫат урлӑ стахановӗҫсен паха ӗҫӗсене тӗплӗн ҫутатса тӑрса, ӗҫре кайа йулакансене мала тухма пулӑшса пынӑ.

Колхоз ҫамрӑкӗсем пур ӗҫре те ыттисене пример кӑтартса параҫҫӗ. Акӑ, Степанӑвпа Зайкин йулташсем жнейкӑсемпе тырӑ вырмали нормӑна 200-шер процент тултарса пычӗҫ. Ҫамрӑк колхозницӑсем кӗлте ҫыхас ҫӗрте те аван ӗҫлерӗҫ, Р. Андрейӗвӑ—605 кӗлте, С. Димитрийӗвӑ 550 кӗлте ҫыхнӑ.

Ватӑ колхозниксем те ҫамрӑксенчен йулас мар тесе вӗсенчен пример илсе ӗҫлерӗҫ. Кӗлтесене капана хывас тӗлӗшпе А. Спиридонӑв, Г. Кириллӑв, С. Михайлӑв колхозниксем стахановла ӗҫлерӗҫ.

Ҫамрӑксем тӑрӑшнипе государствӑна пур культурӑсем тӑрӑх та тырӑ парса татнӑ. Ҫавнашкалах МТС-не 154 центнӗр натурплатӑ панӑ. Пӑрҫа йышши культурӑсене ҫапса пӗтернӗ.

Ҫамрӑксем ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулӑшӑн кӗрешӗве пуҫарса пычӗҫ. Кӗрхи тырӑсене акса хӑвармали участкӑсене лайӑх ҫемҫетрӗҫ. Пӑхса та суртлӑ вӑрлӑхсемпе акса хӑварчӗҫ. Халь кӗрхи тырӑсем пӗр тикӗс шӑтса тухса, йешерме тытӑнчӗҫ. С. Николайӗв.

КОМСОМОЛ

Ленинла комсомол хастарлӑ,
Пур ҫӗртете паттӑррӑн ӗҫлет.
Ӗҫре стахановла ударлӑ,
Ворошилӑвла тӗл перет.

Ҫавӑнпа епӗр комсомола
Паттӑр йатне паратпӑр
Унӑн йачӗпе ҫултан ҫула
Пысӑк уйав тӑватпӑр.

Комсомол ҫиҫӗм пек—сывлӑшра
Вӑл никам ҫӗнтерейми вӗҫевҫӗ.
Хапрӑк-савӑтсенче, колхозра
Ленин орденлӗ ун ӗҫӗ.

Ҫавӑнпа пирӗн комсомола
Парнеленӗ хаклӑ орденсем.

Ӑна мухтатпӑр йурӑпала,
Чунтан савса, хисеплесе.

Коммунисӑм Хӗрлӗ йалавне
Алран йамасть вӑл, комсомол.
Социалисӑм ҫӗршывне
Йаланах паттӑр сыхлат вӑл.

Чикӗре, Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче
Хисеплӗ, чыслӑ командир.
Шкулта вӑл—ӗҫлӗхлӗ учител,
Хирте—хастарлӑ бригадир.

Ак мӗншӗн комсомола епӗр
Пысӑк уйав туса чыслатпӑр,
Йурӑ ҫемми ҫине илетпӗр,
Вутлӑн-хӗмлӗн сӑвӑлатпӑр.

Н. Шелепи.

Фашисӑм— ҫамрӑксен усал тӑшманӗ

Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи ӗҫ-ҫыннисем вӗсене вӗҫӗмсӗр експлоатациленӗ пирки, ӗҫ ҫук пирки асапланаҫҫӗ пулсан, ку йӑвӑрлӑх ачасемпе ҫамрӑксем ҫине тата ытларах ӳкет. Халӗ ӳссе пыракан тӗнчери економикӑлӑ ҫӗнӗ кризис иртнӗ 1929 ҫулхи кризисран тата ҫивӗчрех, тата хӑйӑртарах кризис, капиталисӑмлӑ общӗствӑри ҫамрӑк ӑрусен ахаль те чӑтма ҫук йӑвӑр пурнӑҫне тата ытларах йӑвӑрлатат.

Фашисӑм пуҫ пулса тӑракан ҫӗршывсенчи ӗҫҫамрӑкӗсен пурнӑҫӗ уйрӑмах йывӑр та асаплӑ.

Хӑйӗн хуҫисем—Круппсемпе Тиссенсем хушнисене пурнӑҫа кӗртсе, Германи фашисӑмӗ Германи халӑхне капиталисӑмӑн нимӗн прависӗр чурисем туса хучӗ. Тӗнчери чи культурлӑ ҫӗршывсенчен пӗрине варварствӑ тата вӑрҫӑ вучахӗ туса хунӑ. Гитлӗр влаҫа хӑй аллине илнӗрен вара Германири рабочисен ӗҫукҫийӗ 30 процент ытла чакнӑ, ҫав вӑхӑтрах пурнӑҫ пӗрре те ҫурӑ ытла хакланнӑ.

Германири ҫамрӑксем хапрӑксемпе савӑтсенче кашни кун 11 сехетрен те ытларах ӗҫлеҫҫӗ.

Гитлӗрла фашисӑм ҫамрӑксене асаплӑхпа выҫлӑхлӑ пурнӑҫа кӗртсе йачӗ. „Апатланассин" гитлӗрла ҫистеми ҫамрӑксене аш-какай, ҫу, ҫӑмарта тата ҫӑкӑр сахалтарах ҫиме хушат. Нимӗн тӗлӗнмели те ҫук, апат начар ҫинӗ пирки Германире фашисӑм пуҫ пулса тӑнӑ ҫулсем хушшинче ҫамрӑксен сывлӑхӗ нумай начарланнӑ.

Ҫамрӑк хӗрачасен пурнӑҫӗ тата ытларах йӑвӑр. „Йалхуҫалӑх ҫулӗ" текен саккун кӑларнӑ хыҫҫӑн, Германире 17—25 ҫула ҫитнӗ пӗр ӗҫхӗрарӑмӗ те помешчик йе кулак патӗнче батрачкӑра, йе прислугӑра пӗр ҫул ӗҫлемесен, государствӑ тата уйрӑм ҫын предприйатине ӗҫе кӗме пултараймаст.

Германине ҫар казарми туса хунӑ. Ҫамрӑксене воспитани парассине йалтах вӑрҫӑ задачине пӑхӑнтарнӑ. Германире „Гитлӗрла ҫамрӑксен Союзӗ" тунӑ, ҫак союзӑн тӗп задачи ҫамрӑксене „салтак" майлӑ „воспитани" парасси пулат. Ҫамрӑксене темиҫе ҫӗр ҫынна ӗҫ повиннӑҫӗн лагӗрне хупнӑ. Ҫав лагӗрсенче ҫамрӑксемшӗн савӑнӑҫлӑ кун ҫук, вӗсене вӗ,ӗхӗррисӗр ҫар ӗҫне вӗрентеҫҫӗ.

Ҫара илнӗ Германи ҫамрӑкӗсем тӳсме ҫук йӑвӑр та асаплӑ пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Германи ҫарӗнче хӑйсене хӑйсем вилекеннисем нумай. Ку тӗлӗшпе Германи тӗнчери ҫарсенчен чи малти вырӑнта тӑрат. Ҫартан таракансем питӗ нумай. Вӑрттӑн ӗҫлекен гитлерла полици (гестапо) „таркӑнсене тытакан" уйрӑм отдел тунӑ.

Фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен ҫамрӑксем—ҫамрӑклӑх чечекӗсем вуншар ҫул тӗрмесенче, концентрациле лагӗрсенче асап тӳсеҫҫӗ.

„Пуйаннисемшӗн рай, чухӑнсемшӗн тамӑк"—ҫапла калаҫҫӗ Итали рабочисемпе хресченӗсем фашисла Итали пирки те. Фашисла Италири ӗҫҫамрӑкӗсен пурнӑҫӗ—талкишпех катаргӑ. Ӗҫҫамрӑкӗсен ӗҫукҫийӗ йулашки ҫулсенче 50—60 процент чакнӑ. Ҫамрӑк рабочисем ватӑ рабочисенчен 2—3 хут сахалтарах ӗҫукҫи илеҫҫӗ. Италири промышленнӑҫлӑ чи пысӑк центӑрта—Мажанре кӑна 50 000 ҫамрӑк нимӗн ӗҫсӗр тӑрса йулнӑ. Кӑнтӑрти Италире батраксем—ҫамрӑксем хӗвел тухаччен пуҫласа, хӗвел аничченӗ ӗҫлеҫҫӗ. Анчах ҫакӑн пек йӑвӑр ӗҫшӗн вӗсем 2,5 лир (лир—27 пус) ҫеҫ илеҫҫӗ.

Фашиссем ҫамрӑксене „тӳсме" хушаҫҫӗ. Итали фашисӑмӗ 8 ҫулхи ачасенчен пуҫласа 55 ҫулхи старiксене ҫитиччене обйазательнӑй йӗркепе вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентет.

Гитлӗрпа Муссолинирен фашисла Польшӑ та йуласҫӑн мар тӑрӑшат. Польшӑри ҫамрӑк рабочисен пурнӑҫӗ питӗ йӑвӑр. „Йалхуҫалӑхӗ алсӑр-урасӑр хӑвармали хапрӑк", тесе ҫырат „Зелены Штандар" хаҫат. Польшӑ йалӗсенче ӗҫсӗр ҫынсем 8 мӗлйуна йахӑн хисепленеҫҫӗ, вӗсем йалти ҫамрӑксем. Польшӑ йалӗсенче сывӑ ачасене сайра хутра ҫеҫ курма пулат. 5 мӗлйун ача шкула ҫӳреймест.

Йапонийе илсен, унти ҫамрӑксем нихӑҫанхинчен те ытларах йӑвӑр пурӑнаҫҫӗ. Унти ҫамрӑксем кунне 11—15 сехет ӗҫлеҫҫӗ, ӗҫукҫи пуринчен те сахал илеҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта Йапонире 60 пин ҫын ҫакӑнса-перӗнсе вилнӗ.

Ӗҫҫамрӑкӗсем капиталисӑмла ытти ҫӗршывсенче те питӗ йӑвӑр условире пурӑнаҫҫӗ. Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенче ӗҫсӗр тӑрса йулнисем 14 мӗлйун ҫын пулсан, 6 мӗлйунӗ ҫамрӑксем. Англире те, Францире те ӗҫҫамрӑкӗсем хӗнхурлӑ пурнӑҫпа пурӑнеҫҫӗ.

Совет ҫамрӑкӗсен телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗ капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи ҫамрӑксен фашисӑма, вӑрҫа хирӗҫ, пӗтӗм тӗнчери социалисӑмлӑ общӗствӑшӑн кӗрешес хастарлӑхне ҫӗклет.

Советсен ҫӗршывӗнчи ҫамрӑксем: арҫын ачасемпе хӗрсем Сталинла Конституци ҫине ҫырса хунӑ вӗренӳ, ӗҫлев, кану правипе усӑ кураҫҫӗ. Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн параннӑ Совет ҫамрӑкӗсем социалисӑм строительствин пур участкӑсенче те хӑйсен паттӑрлӑхне кӑтартаҫҫӗ, вӗсем капиталисӑмлӑ йӗритавралӑха асра тытса ӗҫлеҫҫӗ, кӗрешеҫҫӗ.

Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи ҫамрӑксен чи лайӑх пайӗ фашисӑм пусмӑрӗнчен тухасшӑн активлӑн, револьуцилӗ йалавпа кӗрешет. Ҫак кӗрешӳ пуҫланнӑ, вӑл вӗҫне ҫитӗ. Фашисӑма никам та ҫӑлса хӑварма пултараймаст. Фашисӑмпа пӗрле пӗтӗм тӗнчери капиталисӑмлӑ строй та ҫӗр пичӗ ҫинчен ҫухалӗ.

Ҫамрӑксен интернационаллӑ ҫыхӑнӑвӗсене ҫирӗплетер

Кашни ҫул ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери кунне, империалисӑма тата империалисӑмлӑ вӑрҫа хирӗҫ кӗрешес куна уйавласа иртересси ҫинчен 1915 ҫулта ҫамрӑксен социалисла организацийӗсен Бернри конференцинче, урӑхла каласан империалисӑмлӑ вӑрҫа хӗрсе пынӑ вӑхӑтра йышӑннӑ. Малтанхи выступлени 1915 ҫулхи октаберӗн 3-мӗшӗнче Иевропӑри тата Америкӑри пур ҫӗршывсенче те пулса иртнӗ: ун чухне ҫамрӑксемпе хӗрачасем 100 пин ҫын ытла урамсене тухнӑ.

ССР Союзӗнчи Октабӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револьуци ҫамрӑксен револьуцилӗ йухӑмне аталантарас ӗҫре татӑклӑ пӑлӑшу панӗ. Больщевиксен партии ҫулпуҫӗсем —Ленин тата Сталин 1918 ҫулта Российӑри Ҫамрӑксен Коммунисла Союзне туса хучӗҫ. 1919 ҫулта Ҫамрӑксен Коммунисла Интернационалне тунӑ. Ҫавӑнтанпа ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери кунне Ҫамрӑксен Коммунисла Интернационалӗ йертсе пынипе туса иртереҫҫӗ, вӑл ҫулран ҫул ытларах массӑлӑ тата револьуцилӗ характӗрлӑ пулса иртет.

* * *

Фашисӑм етемлӗх вальли выҫлӑх, хӗн-хур, чухӑнлӑх илсе килнине пӗтӗм тӗнчери ӗҫ ҫамрӑкӗсем курса тӑраҫҫӗ.

ССР Союзӗнче социалисӑм аслӑ ҫӗнтерӳсем тунине курса, Испанири тата Китайри ӗҫсене курса, ҫамрӑксен фашисӑма хирӗҫле йухӑме йулашки ҫулсенче питӗ вӑйлӑ ӳсет. Буржуалӑ демократилӗ ҫӗршывсенче ӗҫҫыннисен ҫамрӑкӗсем фашисла тата реакцилӗ елементсене хирӗҫ кӗрешмели фронт организацилеҫҫӗ.

Францири револьуцилӗ ҫамрӑксем компарти чӗннипе пӗтӗм халӑх курайман фашисӑмӑн ҫулне картласа лартма Парижри тата ытти хуласенчи урамсене ҫитӗннӗ рабочисемпе пӗрле тухрӗҫ. Францири ҫамрӑксем кагульарсене—Франци халӑхӗн ирсӗр тӑшманӗсене пӗтерме хӑйулӑн ыйтрӗҫ тата ыйтаҫҫӗ те. Малта пыракан ытти ҫӗршывсенчи пекех, Францири ҫамрӑксем те етемлӗхӗн тӗп тӑшманне хирӗҫ —фашисӑма хирӗҫ, демократишӗн, вӑрҫа хирӗҫ Испани ҫӗрӗ ҫинче кӗрешме хӑйсен чи лайӑх представителӗсене республикӑла Испани ҫарне йачӗҫ.

Республикӑлӑ Испанире питӗ паха организаци — Социалисла Ҫамрӑксен Пӗрлешӳлӗ союзне туса хунӑ, вӑл организацире ҫур мӗлйун ытла член шутланат. Испанири Социалисла Ҫамрӑксен Пӗрлешӳлӗ союзӗн нумайӗш членӗсем тӑван ҫӗршыв никама пӑхӑнас маршӗн, ирӗклӗхшӗн геройла кӗрешеҫҫӗ.

Ҫав союз ретӗнчен пиншер командирсем тата комиссарсем, ирӗклӗхшӗн кӗрешес ӗҫре нумай хисеплӗ геройсем тухаҫҫӗ.

Китай халӑхӗ Йапони воӗнщинине хирӗҫ, ирӗклӗхшӗн кӗрешес ӗҫре ҫамрӑксем тӗп вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Китай халӑхӗсен чи паллӑ йенӗ—пӗрлӗхлӗх пулса тӑрат.

Китай комсомолӗҫӗсем Йапони интервенчӗсене хирӗҫ пӗтӗм халӑх кӗрешес ӗҫе ҫамрӑксене активлӑн хутшӑнтармалине лайӑх ӑнланса илнӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ вӗсем ҫамрӑксен коминданла организацийе пӗрлешрӗҫ; вӗсем ҫамрӑксен хальхи организацисене анлӑрах сарса, ҫӗнӗ организацисем тума тата вӑл организацисене ҫамрӑксемпе хӗрачасене ытларах йӑвӑҫтарма тӑрӑшаҫҫӗ.

Салтаксем, ҫар командирӗсем тата партизанла отрйадсен командирӗсем пулса кӗрешекен ҫамрӑк паттӑрсен нумайӗшӗн йачӗсене пӗтӗм Китай пӗлсе тӑрат.

Испанипе Китайра ҫеҫ мар, тӗнчери пур ҫӗршывсенче те, тискер кайӑкланса кайнӑ фашисӑма отпор пама, пӗтӗм тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫӑн тискерлӗхӗсене ҫирсе йама ҫамраксем хӑйсен речӗсене ҫирӗплетеҫҫӗ.

Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери XXIV-мӗш кунӗ фашисӑма хирӗҫле вӑйсем ӳснине, Ҫамрӑксен Коммунисла Интернационалӗн VI-мӗш конгресӗ пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксене пӗрлешме, фашисӑма хирӗҫ пӗрле кӗрешме чӗнни мӗнле пурнӑҫланса пынине уҫҫӑнах кӑтартса парӗ.

Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери XXIV-мӗш кунӗ Ҫамрӑксен Коммунисла Интернационалӗн кӗрешӳ лозунгӗсемпе пулса иртӗ.

* * *

ССР Союзӗнче ПСҪЛКС Тӗп-комӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери XXIV-мӗш кунӗ йачӗпе демонстрацисем ҫентаберӗн 6-мӗшӗнче пулса иртеҫҫӗ. Ҫак кун пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чечекленекен хулисемпе йалӗсен урамӗсене нумай мӗлйунлӑ ҫамрӑксем—совет ҫӗршывӗнчи ҫамрӑк патриотсен сталинла ӑрӑвӗ, социалисӑмӑн активлӑ строительсем тухаҫҫӗ.

ССР Союзӗнчи халӑхсен 43 процентӗ—Октабӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револьуци хыҫҫӑн ҫуралнӑ ҫамрӑксем. Пирӗн ҫамрӑксем пурнӑҫри пур ырлӑхсемпе те, Октабӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револьуци ҫӗнсе илнӗ пур ырлӑхсемпе те усӑ кураҫҫӗ. Совет ҫамрӑкӗсем ӗҫсӗрлӗх, чухӑнлӑх, ыранхи кун шанчӑксӑр пулнин хӑрушлӑхӗсене пӗлмеҫҫӗ. Пирӗн ҫамрӑксем ӗҫ, кану, вӗренӳ прависемпе усӑ кураҫҫӗ. Халӑх хуҫалӑхӗн пур отраслисенче те ҫамрӑксем геройла ӗҫлеҫҫӗ. Хӑйсем хушшинчен халӑх йуратакан ӗҫ паттӑрӗсене ӳстерсе ҫитӗнтереҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра Кӑнтӑр-Донецк чукунҫулӗн начальникӗ пулса ӗҫлекен комсомолӗҫ Петр Кривонос йатне, Дуҫӑ Виноградӑвӑ, Марийӑ Демченко, шывҫул транспӑрчӗн рационализаторӗ Блидман йачӗсене тата комсомол ӳстерсе ҫитӗнтернӗ—стахановла йухӑма пуҫарса йаракансен ыттисен йачӗсене те ҫӗршыв лайӑх пӗлсе тӑрат. Социалисӑмла государствӑн чиккисене ҫивӗч сыхлакан ҫамрӑк красноармейӗҫсене, краснофлотӗҫсене, командирсене халӑх йуратса тӑрат.

ССР Союзӗн Верховнӑй Советне, союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене лайӑхран та лайӑх ҫамрӑксемпе хӗрачасене суйланӑ. Аслӑ халӑхӑн пысӑк шанӑҫне ҫамрӑксем, тӳрӗ, творчӗстволлӑ, пултарулӑ ӗҫленипе ответлеҫҫӗ.

Ҫак ҫулхи октабӗр уйӑхӗнче совет ҫамрӑкӗсен авангарчӗ—Ленинла Сталинла комсомол хӑй 20 ҫул тултарнине паллӑ тӑват. Комсомол хӑйӗн чыслӑ йатне—револьуцин ҫамрӑк резервин, коммунисла партин тӗрӗс те шанчӑклӑ помошникӗн йатне тӳрре кӑларчӗ. Ҫӗршыв умӗнчи чыслӑ ӗҫӗсемшӗн комсомола кӗрешӳ тата Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Йалав орденӗсемпе наградӑланӑ.

Халӑх тӑшманӗсем—троцкисла-бухаринла ирсӗр бандитсем комсомола партирен уйӑрса йарасшӑн, унпа хӑйсен пӳтсӗр ӗҫӗсенче усӑ курасшӑн пӗр хут ҫеҫ мар хӑтланса пӑхрӗҫ. Тӑшмансен хӑтланӑвӗсем ҫӗмӗрӗлсе пӗтрӗҫ. Комсомол большевикла позицирен пӑрӑнмарӗ тата нихӑҫан та пӑрӑнас ҫук.

Ленинла-Сталинла комсомол пирӗн ҫамрӑксем хушшинче тивӗҫлӗ авторитетпа усӑ курат. Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери кунне хатӗрленнӗ вӑхӑтра ҫамрӑк рабочисем, колхозниксем, служащисем комсомол ретне кӗчӗҫ. Малта пыракан совет ҫамрӑкӗсене комсомола илес тӗлӗшпе малашне те пӗр майах ӗҫлесе пымала.

Капиталисӑмлӑ йӗритавралӑх ҫинчен, ҫӗнӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ ҫинчен, револьуцилӗ сисӗмлӗхе пӗрмай ӳстерсе вӑйлатма кирли ҫинчен, интернационаллӑ пролетарилӗ ҫыхӑнӑва ҫирӗплетмели ҫинчен, Совет Союзӗн оборонӑ пултарулӑхне ӳстермели ҫинчен пирӗн ҫамрӑксен пӗр минутлӑха та манмала мар.

Комсомолӗҫ Иванова панӑ хӑйӗн ответӗнче Сталин йулташ ҫапла ҫырнӑ: „ССР Союзӗнчи рабочи клас буржуалӑ ҫӗршывсенчи рабочи класпа интернационаллӑ пролетарилӗ ҫыхӑнса тӑрассине вӑйлатмала тата тӗреклетмеле; пирӗн ҫӗршыв ҫине вӑрҫӑпа тапӑнас-мӗн пулсан, буржуалӑ ҫӗршывсенчи рабочи клас пирӗн ҫӗршыври рабочи класа политикӑлӑ пулӑшассине организацилемеле, ҫавӑнпа пӗр пекех пирӗн ҫӗршыври рабочи клас буржуалӑ ҫӗршывсенчи рабочи класа пур майсемпе те пулӑшассине организацилемеле; хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫара, Хӗрлӗ флота, Хӗрлӗ авиацине, Осоавиахима вӑйлатин тата тӗреклетин кирлӗ. Нимӗнле „авӑрӑнӗсем" та тата пирӗн тулти тӑшмансен нимӗнле фокусӗсем те пире кӗтмен ҫӗртен пырса ан тывччӗр тесе, хамӑрӑн пӗтӗм халӑха вӑрҫӑпа килсе тапӑнас хӑрушлӑх умӗнче мобилизацилӗ хатӗр тытмала..".

Сталин йулташӑн ҫак сӑмахӗсенче—комсомолӑн тата совет ҫамрӑкӗсен ӗҫӗн пӗтӗм программи.

Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери XXIV-мӗш кунӗ вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ уйрӑмӑнах ҫивӗчленнӗ вӑхӑтра пулса иртет. Фашисӑм ҫӗнӗ тӗнче вӑрҫи хатӗрлет. Миршӗн кӗрешсе совет ҫамрӑкӗсем хӑйсен тӑван ҫӗршывӗн оборонӑ хӑватне ҫирӗплетеҫҫӗ, алла хӗҫпӑшал тытса унӑн чиккисене хӳтлеме хатӗрленеҫҫӗ.

Совет ҫамрӑкӗсем Испанипе Китайӑн паттӑр кӗрешӗвӗсене пысӑк тимлӗхпе сӑнаса пыраҫҫӗ. Совет ҫамрӑкӗсем, мир йалавӗ айне пур ҫӗршывсенчен те пӗтӗҫсе, хӑйсен представителӗсене миршӗн кӗрешекен Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксен II-мӗш конгресне йанӑ 40 мӗлйун ҫамрӑксемпе хӗрачасене саламлаҫҫӗ. Вӑл конгресра ҫамрӑксем пӗрлӗхшӗн, фашисӑма хирӗҫ кӗрешме, ССР Союзне—социалисӑмӑн пӗрремӗш ҫӗршывне, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен тӑван ҫӗршывне сыхлама хатӗр пулни ҫинчен пӗтӗм сасӑпа пӗлтереҫҫӗ.

Ҫамрӑксен Пӗтӗм тӗнчери XXIV-мӗш кунне совет ҫамрӑкӗсем большевикла сисӗмлӗхе ӳстернӗ паллӑпа, ҫӗмӗрсе тӑкнӑ троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ националисла фашисла ҫӳп-ҫапсен йулашкине пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкас лозунгпа уйавласа иртереҫҫӗ.

Чаплӑ совет ҫамрӑкӗсем хӑйсен пӗтӗм тӗнчери уйав кунӗнче саламла йуратун малтанхи сӑмахне—пурнӑҫ, савӑнӑҫ, телей туса панӑ ҫын йенеле ҫавӑрса—хӑйӗн ӳчителӗ тата тусӗ, халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин йулташ йенеле ҫавӑрса калӗҫ.

Н. Слуцкер.

Тырпулсене пухса кĕртесси

Пучахлă тырăсене 73.769 пин гектар вырнă

Августăн 31-мĕш тĕлне Совет Сойузĕ тăрăх пучахлă тырăсене 73.769 пин гектар вырнă—плана 84 процент тултарнă. Колхозсем плана 85 процент тултарнă, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—74 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем — 84 процент тата Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—95 процент тултарнă.

Халĕхи вăхăтра тырпулсене пухса кĕртесси хĕвелтухăçĕнчи районсене хĕрÿлĕн пырат. Анса пулнă тырпул кунта пур çĕрте те пиçсе çитнĕ.

(ТАСС).

Кĕрхи тырăсене акасси тата кĕрхи çĕртме тăвасси

Августăн 31-мĕш тĕлне Совет Сойузĕ тăрăх кĕрхи тырăсене 15.189 гектар акнă—плана 42 процент тултарнă. Колхозсем плана 43 процент тултарнă, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—29 процент, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем— 26 процент тата Апат-çимĕç промышленнăç Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем—42 процент тултарнă.

Çĕршыври колхозсемпе совхозсем августăн 31-мĕш тĕлне 3.667 пин гектар кĕрхи çĕртме тунă—плана 5 процент тултарнă.

(ТАСС).

Йĕтĕн-кантăр пуçтармали çĕнĕ машинăсем

Иалхуçалăх машинисем тăвакан Ухтомский йачĕпе тăракан Љуберецкри савăт кăçал йĕтĕн-кантăр пуçтармали çĕнĕ машинăсем чылай туса кăларнă.

Сарлака ретпе йĕтĕн тататакан ЛТ-7 машинăна массăлăн туса кăларма пуçланă. Йĕтĕн татакан калличенхи машинăсемпе танлаштарсан, çак çĕнĕ машинă нумай лайăхрах.

Йĕтĕне татса кĕлтене çыхакан аппаратлă машинăн експериментлă образецĕсене туса хирте сăнаса пăхнă. Йĕтĕне сарлака ретпе татакан 12 çекцилĕ машинăна туса сăнанă, вăл машинă çĕнĕ СТЗ-НАТИ трактăрпа çĕклемеле. Машинăсене сăнаса пăхни лайăх резултатсем панă.

Çавăн пекех йĕтĕн комбайне те хирте сăнаса пăхнă. Вăл пĕр вăхăтрах йĕтĕне татат, вăрлăхлă пуçĕсене тураса илет тата кĕлтене çыхат.

Љуберецк савăчĕ лайăхлатнă конструкцилĕ кантăр сармали машинăсем тума пуçланă, вăл машинă 2 метр сарлакăш сарса пырат. Çак машинăн ÿсен-тăранăн тунине 5—6 сантиметр çÿллĕш хăваракан касмали аппаратне чылай айăла антарнă. Халиччен кăларса тăнă машинăсем 13—14 сантиметр хăварнă.

Кусемсĕр пуçне тата, сăнас майпа, кĕлте çыхмали, кĕлтене çыхакан кантăр пуçтармали аппаратлă машинăсем туса хатĕрленĕ. Хирте сăнаса пăхнă хыççăн, вĕсене массăлăн тума тытăнаççĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

* Мишкинск районĕнчи (Челябинск облаçĕ) „Заготзерно" сотрудникĕ Томилăв йулташ государствăн 1938 çулхи шалти заййомĕн пĕрремĕш тиражĕнче 5.000 тенкĕ выљаса илнĕ. Томилăв йулташ çак зайомăн облигацийĕсене татах 1 пин тенкĕлĕх илнĕ.

* Совет Сойузĕн Геройĕ И. Д. Папанин йултăш Калинин облаçĕнчи Бежецк районĕнчи колхозниксем патне хăнана пынă. „Михайлова гора" йатлă колхозра вăл икĕ кун хушши пурăннă.

* Çентăбĕр уйăхĕнче Воронежри чукунçул техникумĕ 60 çул тултарат. 40 çул хушшинче—1878 çултан пуçласа 1918 çула çитиччен—унтан 685 çын вĕренсе тухнă. Совет влаçĕ чухнехи çирĕм çул хушшинче чукунçул техникумĕ 1.374 специалис вĕрентсе кăларнă.

* РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕ Тутар республикинчи Агрыз районĕнчи Агрыз йатлă рабочи поçолăка хула тăвасси çинчен указ йышăннă.

* Инçет-Хĕвелтухăçне йаланлăха пурăнма куçнă Мичуринсен патриотла çемйине Уссурийск облаçĕнчи Спасск йалĕнче лайăх çуртра вырнаçтарнă. Райĕçтăвком решенийĕ тăрăх, Мичуринсен çемйине куçма 6.000 тенкĕ укçа уйăрса панă.

* Халĕхи вăхăтра Горький облаçĕнче 525 ача сачĕ шутланат. Вĕсенче пурĕ 26 пин ача пурăнаççĕ.

Суту-илÿ ĕçĕнчи йĕркесĕрлĕхсемпе кĕрешмеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Чурачăк йалпоĕ пĕрремĕш квартал таварçаврăнăш планне 85 процент, 2-мĕш квартал планне—83 процент, ийулĕ уйăхĕн планне 26,4 процент çеç тултарнă. Хурамал йалпоĕнче те çавăн пекех.

Хăшпĕр йалпосем начар ĕçленине пула, районĕпе илсен пирвайхи çурçулăхри таварçаврăнăш планне 95 процент анчах тултарнă. Пĕрле апатланас çĕç те лайăхах мар. Леспродторг столовăйĕ 6 уйăхри финанс планне 132 процент тултарнă пулсан, Чăваш Тимеш йалпоĕнчи столовăй 86,9 процент çеç тултарнă.

Растратăсемпе çаратусене хирĕç начар кĕрешеççĕ. Чурачăк йалпоĕнче 5000 тенкĕ, Хурамалта—2746 тенкĕ, Чăваш Тимешре—2765 тенкĕ растратă укçине халĕ те шыраса илмен.

Таварсене базăран йе складран турех сутса йала халĕ те пĕтменнĕ. Çакăн пек йала Чăваш Тимеш йалпоĕн складĕнче час-часах пулкалат. Склада лайăх таварсем (коçтум, паљто, атă-пушмак) килсен, вĕсем складран тухаймаççĕ, суту-илÿ вырăнĕсене çитиччен сутăнса пĕтеççĕ.

Çавнашкал тĕслĕхсем Туçа йалпоĕнче те пур. Закупщик Домикăн лайăх таварсене час-часах пытарса йулса хăйĕн çывăх тăванĕсене, йултăшĕсене сутат. Çапла, ийулĕн 11-мĕшĕнче, Райсойуз базинчен одейалсем илнĕ, пайщиксем вĕсен тĕсне те курайман.

Лавкасенче куљтурăлă суту тăвассине йĕркелесе йаман. Чурачăк Асакасси йалĕнчи лавкасем час-часах хупăнса тăраççĕ. Асакасси йалĕнчи лавкара ĕçлекен Таборкин тавара хутпа кĕркесе панăшăн 10 пус укçа илсе йулат.

Райсойуз суту-илÿ ĕçĕнчи йĕркесĕрлĕхсемпе кĕрешмест, суту-илÿ ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсемшĕн районри суту-илÿ пайĕн пуçлăхĕ Мартинăв та тÿйаппа. Вăл суту-илÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен çырса панă ĕççыннисен жалăбисене 3—4 уйăх хушши тĕрĕслемесĕр вырттарат. Районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат редакцийĕ 1938 çулхи йанвар уйăхĕнчех пуçласа суту-илÿ пайне тĕрĕслеме 17 жалăба йанă, вĕсенчен 6 жалăбăна çеç тĕрĕслесе ответ панă, ытти 11 жалăбă тĕрĕслемесĕрех выртаççĕ. Йанварпе феврал уйăхĕнче йанă 5 жалăба тăрăх ниăмĕнле мерă та йышăнман.

Дм. Михайлăв.

Отличниксене преми пачĕç

ШĂХАСАН. Уйкас-Кипекри лавкара суту-илÿ ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Романăвпа Е. Иванов продавецсем лавкана йалана вăхăтра уçаççĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çапла вĕсем 2-мĕш квартал таварçаврăнăш планне ытлашшипех тултарчĕç. Романăв 115 процент, Е. Иванов 114 процент тултарнă. Çавăн пекех Йĕнепри кооперативра ĕçлекен И. Иванов хăйĕн 2-мĕш кварталти тавар сутас планне 107 процент тултарчĕ.

Йалпо уполномоченнăйĕсен конференцийĕ Романăвпа Иванов продавецсене кĕсйе сехечĕ, Е. Иванов продавеца 50 тенкĕ укçа парса премилерĕ Йалпо председателне Тихăнăва пĕр уйăх çурă ĕçукçи чухлĕ укçан, йалпо счетоводне Митрофанăва кĕсйе сехечĕ парса премилерĕç.

Дм. Иванов.

Хĕрлĕ Çар призывĕ

Авиаци техникĕ пуласшăн

Ванифати Морйаковăн ашшĕ 62 çула, амăшĕ 60 çула çитнĕ. Шăллĕ—Мефодий 1922-мĕш çулта çуралнă. Килте ĕçлекенсем çук. Сакăр кун тăрăх комисси Ванифатине љгота пама йышăнчĕ. Райĕçтăвкомăн çарĕç пайĕн начаљникĕ:— Морйаков йулташ, сире епĕр љгота пама йышăнтăмăр, призыва кĕместĕр,—терĕ. Морйаков кăна илтсен, ним тума та пĕлмерĕ.

Призыв пуçланчĕ. Покровский йалсоветне кĕрекен йалсенчи призывниксем Сĕнтĕрвăрри хулине призыв комиççине пычĕç. Морйаков та пĕрлех пычĕ. Призыв комиççинчен комиççине кĕртме тархасласа ытрĕ, Хĕрлĕ Çар ретне кайасшăн пулнă. Комиççи унăн ыйтăвне пурнăçламала пулчĕ.

Пĕр çул кайарах Ванифати номĕрлĕ авиаци чаçне килчĕ. Халĕ вăл çĕнĕ гимнаçторкă, калифе тăхăнса çÿрет. Петлица çинче виçĕ вичĕкĕтеслĕх, кайăк çунатипе пропеллĕр. Морйаков кĕçĕн командир—моторист. Çак хисеплĕ йата илессишĕн çине тăрса вĕренчĕ.

Государства екзамĕнне пур предметсемпе те „хорошоран" кайамар паллăсемпе тытрĕ.

Çар ĕçне лайăх пĕлет. Ана командование темиçе хут та премилерĕ. Çак кунсенче винтовкăран отличнăй пенешĕн лейтенант Латышĕв ăна тав турĕ.

Ĕç кунĕ пĕтнĕ чухне йе тата машинăна сывлăша кăларса йанă чухне самољотă тĕплĕн пăхса тухат. Моторĕсем ĕçленине тĕрĕслесе, моторсем йĕркеле ĕçлеççĕ.

Ленинпа-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине пысăк çитĕнÿпе кĕтсе илме пулса, Морйаков йулташ моторист Михайлăв йулташпа ăмăртăва тухрĕ. Амăртура малта пырат. Катартулă тĕслĕхсемшĕн ăна хисеп хăми çине çырнă.

Унăн ĕмĕчĕ пысăк. Вăл техникăна вĕренмели кружока çÿрет, авиаци техникĕ пуласшăн. Хĕрлĕ Çар ретĕнчи кашни çын пысăкрах пĕлÿ илме тăрăшат. Морйаков пекскисем пирĕн хушăра нумай.

Кĕçĕн командир П. Анисимăв.

Призыв пунктне лайăх илемлетнĕ

ТАВАЙ. Рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн призывне районри çамрăксем пысăк хавасланăхпа кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ Çар ретне йурăхлă пулма хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетеççĕ.

Тавай çарĕç пайĕн вĕренÿ пунктĕнчи призывниксем кашнийех „Ворошиловский стрелок" тата оборона значокĕсене илнĕ. Л. Шашков призывник отличнă паллăпа вĕренсе тухрĕ. Хăй призыва хатĕрленнĕ май, ашшĕне амăшне колхоза кĕртрĕ.

Районра призыв çак çулхи çентăбĕрĕн 25-мĕшĕнче пуçланат. Çак уйава лайăх кĕтсе илме призыв пункчĕ вăлљаи çурт хатĕрленĕ. Ăна пур йенчен те лайăх илемлетнĕ. Призыв кунĕнче „Призывник" стена хаçачĕ кăларма хатĕрленеççĕ. Унăн редектăрне суйланă.

А. Пикшикин.

Октăбĕр каччи

Нумай кунсем, çулсем иртсен, асаилтĕм еп тепре
Хĕвел кичемĕн пăхнине пăтранчăк тÿперен.
Асаилтĕм: çамрăк каччăсем питашлăне сулса
Тухса кайатчĕç салтака, ÿкес пек хурланса.
Майăн шăнкри шăнкăртатса тухатчĕ хапхаран,
Кичемлĕ сасă йантраса тăратчĕ хăлхаран.
Хуркайăксем ниме пĕлмесĕр карти-картипеле
Вĕçсе иртетчĕç çÿлтен йăш кантăр йĕнеле.
„Салтакăн йачĕ çăхăр мар, ан хапсăнăр пире",—
Тесе йурлатчĕç куççуçпе ун чух йĕре-йĕре,
Анчах, темле куççуç тăксан та, çăмăлланман шăпа.
Пахчасенчи улмуççисен пиççе тăран улмийĕсем,
Пĕрле улах ларса пурнан çар хĕрĕсен кăмăлĕсем
Вĕсемшĕн йăнăн тунăнна ĕмĕрлĕхех йала,
Мĕнма тесен, шанчăк пулман çитмешкĕн кайала.
Нумай кунсем, çулсем çапла иртрĕнĕ унчухне,
Урса тăлпанă темĕнчул йăш çамрăксен чунне.
Пайанхи пек телей пулман нихçан урамсенче,
Хитре хĕвел шевли çиçмен нихçан çамрăксенче.
Кăçал Октăбĕр каччисем, ман çамрăк шăллăмсем,
Пыма пуçларĕç призыва. Çĕкленнĕ чунĕсем.
Уйав кунхи хаваслăхсем кашнийĕн чĕринче.
Вĕсем илесшĕн чысла йат, ĕмĕт кашнин пĕрре:
„Хăт кантăрта, хăт çурçĕрте пуласчĕ чикĕре,
Çĕршывăма сыхласчĕ мĕн пур иртĕр тăшманран,
Чунăм туртат хĕрлĕ çара, вăй-хал вĕрет манра".
Пĕр-пĕр чипер хĕр савнине кĕртет-и призыва,
Алне тытса бойец пулма телейлĕн ыр сунат.
Амăш кĕтет йăш хыпар хăй ывăлĕ шанса,
Йар уçă кантăк умĕнче йурлат чăлха çыхса.
Çÿхен вĕçре иртен çилĕ вуççĕ вăйăççем,
Вĕл-вĕл вĕçсе ÿкес çĕре саралнă çулçăсем.
Хуллен кĕрнеклĕ кас килет, шур уйăх хăпарат,
Призывниксем илсе килесçĕ ун чи йăш хыпара.
Хыпар çÿрет урампала, килрен кĕрет:
Вунвиççĕш кайнă, ăт çара—вуннăччĕ йĕкĕтрен.
Мĕнпур колхозăн çыннисем пĕр хаваспа сывнас,
Кулăс тухса урам варне çĕн кĕвĕсем выљат.
Кăçал Октăбĕр каччисем, ман çамрăк шăллăмсем,
Çапла тухаççĕ призыван. Çĕкленнĕ чунĕсем.
Çара илнишĕн савăнса, хисеплĕ Наркома
Сăмах параççĕ чĕререн çĕршывшăн вăй хума:
„Октăбĕр илнĕ ирĕке, Октăбĕр хĕвелне,
Йунпа хĕретнĕ йалава, етемлĕх телейне
Епĕр памастпăр тăшмана, кĕртместпĕр чикĕрен.
Саламлă тав çĕршыв сана ÿстернĕшĕн пире!"

Иван Малгай.

Хаçатсенчен

Коњух-писатĕл

Шадринск йалсоветĕнчи (Горький облаçĕ) Ворошилăв йачĕпе тăракан промколхозри коњух Иван Федăрăвич Коваљов çав тери паха халапсен автăрĕ пулса тăрат. Вĕсенчен пĕри „Ледяной холм" „Народное творчество" йатла сборнике кĕнĕ. Йулашки икĕ халапа—„О трех соколах" тата „Девяткин" халапсене Коваљов йулташ халăх пултарулăхĕн центрти театрне йарса панă.

Çак кунсенче Иван Федăрăвич коњуха совет писателĕсен сойузĕн членне йышăннă.

(„Горьковская коммуна").

Хайулă операци

1919 çулти феврал уйăхĕнче, шурă бандитсемпе çапăçнă чухне, хĕрлĕ партизана И. М. Йефимăва йăвăр амантнă пулнă. Ӳт ăшне кĕрсе ларнă винтовка пуљљине вăл вунтăхăр çул хушши йатса çÿренĕ. Тапхăр-тапхăр пуљă ăна чăтма май çук ыраттарса тăнă. Темиçе çул хушши вăл çав пуљăна ÿт ăшĕнчен кăларас тесе тăрăшнă, анчах тухтăрсем пуљăна кăларса илме килĕшмен, вилесрен хăранă.

1938 çулта, нумайах пулмаст, Йефимăв партизан çав усал пуљăран хăтăлнă. Хусанти чукунçул пуљницинчи профессăр В. А. Гусынин ăна питĕ ăнăçлă операци туса, пуљљине кăларса илнĕ. Халĕ вăл пуљă Хусанти чукунçул пуљницинчи хирурги музейĕнче усранат.

(„Красная Татария").

„Хурт-кăпшанкăсем ваљљи електричĕствă пуканĕ"

Калифорни (Америкă) университет профессăрĕ Еллуорт сийенлĕ хурт-кăпшанкăсене пысăк вăйлă електричĕствă токĕпе пĕтермели çĕнĕ май шухăшласа кăларнă. Хурт-кăпшанкăсене çутă сăрсем уйрăмах илĕртеççĕ. Хурт-кăпшанкăсене тытмали çутă краскăпа сăрланă хатĕрсене уйа лартаççĕ. Ун çине пырса ларакан хурт-кăпшанкăсем, вăл хатĕр çине йанă токпа часах вилеççĕ. Вăл хатĕре професcăр „хурт-кăпшанкăсене тытмали електричĕствă пуканĕ" тесе йат панă. Вăл хатĕре тĕрĕслесен, çав хатĕр пĕр кун хушшинче 5.000 хурт-кăпшанкăна пĕтерннне палăртнă. Профессăр сăмахĕ тăрăх, кун пек хатĕр пĕр гектар çине иккĕ кирлĕ пулат.

(„Прăгер прессе").

Ӳт ăшĕнче çÿрекен йĕп

Кренденхиллта (Англи) тĕлĕнмеле ĕç пулса иртнĕ. 1898 çулта пĕр Йелизаветă Аццарт йатлă хĕрарăм урай çунă чухне унăн аллине йĕп кĕрсе кайнă. Вăл йĕп тухман, ÿт çине тăранăх кĕрсĕ ларнă. Вăл 40 çул хушши хĕрарăм ÿчĕ ăшĕнче ытлашши кансĕрлемесĕрех пурăннă. Халĕ нумай пулмаст вăл йĕпе Йелизаветă Аццарт уринчен çăмăлăнах кăларнă.

(„Эвр").

Çичĕ республикă спартакиади

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри комитечĕ йышăннă тăрăх, çентăбĕрĕн 4, 5, 6-мĕшсенче Хусанта çичĕ нациллĕ республикăсен спартакиади пулса иртет. Спартакиадăра Тутар, Башкир, Чăваш, Мари, Мордва, Удмурт тата Коми АСС Республикисен чи лайăх 300 физкуљтурникĕсем хăйсен спорт мастăрлăхне вĕсем ĕçлеме тата ССР Сойузне сыхлама хатĕр тăнине демонстрацилесе параççĕ.

Чăваш республикинчи физкуљтурниксен коллективĕ çентăбĕрĕн 2-мĕшĕнче Хусана çитнĕ.

Çентăбĕрĕн 4-мĕшĕнче спарткиадă пуçланнă. Малтанхи кун çăмăл атлетикăпа тата пăшалтан пересси ăмăртусем пулнă.

29 çынна шыва путасран çăлнă

Чăваш республикинчи Осводшыва путакан çынсене пулăшу паракан станцисем 4 çĕрте тунă. Вĕсенчен икĕ станци Шупашкарта, ытти иккĕшĕ—Улатăрпа Сĕнтĕрвăрринче. Кăçал 8 уйăх хушшинче çав станцисем çывăхĕнче 32 инкек-синкек пулнă. Станцисем 29 çынна шыва путса вилесрен хăтарса пулăшу панă. 3 çынна шывран вăхăтра кăлараймаç.

Осводан Шупашкарти командине лайăххăх организацилес майпа, йатарласа тунă хатĕрпе шыв тĕпне анма вĕренет. Водолаз ĕçне икĕ çын Мускаврах вĕренсе килнĕ.

Пĕтĕм Сойузри Осводсен ĕç опычĕсемпе паллашас майпа, Чăваш Освочĕ Горький облаçĕнчи справкăсем паракан кантурăн хаçатсенчен заметкăсем кассăсем илекен çекципе договăр тунă. Вăл чăваш Осводне Совет Сойузĕнче тухса тăракан хаçатсенче Освод ĕçĕсем çинчен çырнă заметкăсене касса илсе йарса тăрат. Кун пек заметкăсене кăçал çĕр ытла илнĕ. Вăл заметкăсем шыва пулакан инкексинкексене сыхланма тата шыва путма пуçланă çынсене васкавлă пулăшу пама лайăх вĕрентеççĕ.

П. Осипăв.

22 çул учителницăра ĕçлет

Перасковйа Дмитрийевна Почейкина учителницăра 22 çул хушши ĕçлет. Халĕ Турхан районĕнчи Ишлей йалĕнчи шкулта вĕрентет. Вăл Ишлейри шкулта 10 çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Почейкина й. вĕрентнĕ ачасем нумайăшĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ тата тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеççĕ. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вăл вĕрентнĕ ачасенчен 5-шĕ мухтав грамати илнĕ.

П. Лазарĕв.

Тăрăшса ĕçлекен почтаљон

Çултан çул колхоз йалĕнче куљтурă учрежденисем йышланса пыраççĕ. Ĕç кунĕ пĕтнĕ хыççăн, колхозниксем хăйсен канăçне вăл учрежденисенче—клубра, театра, кинора, вулав çуртĕнче, хĕрлĕ кĕтесре ирттереççĕ, тĕрлĕрен кружоксенче вĕренеççĕ. Çавна май, вĕсен куљтурлăхĕпе политикăлă пĕлĕвĕ те хăпарса пырат. Вĕсем илемлĕ литературăсем, хаçат-журналсем ытларах вулаççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл почтаљонсене хаçат-журналсем сарассине пысăкрах ĕçлеме хушат.

Йунтапари (Елĕк р-нĕ) почтаљонĕ йал Ландышĕв йулташ хаçат-журнал сарассине тăрăшса ĕçлет. Çентăбĕрĕн 1-мĕшне 600 екземпляр (вăл çÿрекен йала пур 328 хуçалăх) тĕрлĕрен хаçат-журналсем сарнă. Халĕ кашни хуçалăхах илмесĕр екземпляра йăхăн хаçат йе журнал илсе тăрат.

Ландышĕв йулташ почтă ĕçне йуратат. Вăл почтаљонра 8 çул ĕçлет. Хаçат-журнал сарассипе сулсерен районра малти вырăнта пынă.

Лайăх ĕçленĕшĕн ăна районри çыхăну кантурĕ 120 тенкĕ укçан парса премилене.

М. Йакăвлĕв.

Суд

Çынна хĕнесе вĕлерекен

Канаш районĕнчи Асхва йалĕнче пурăнакан Федосийа Крылова „Хĕрлĕ хĕм" колхоз бригадирне Михал Йакăвлева тата унăн арăмне Марийа Филипповнăна рычакпа хĕненĕ. Филиппăвна йăвăр суранпа чăтаймасăр пĕр талăкран вилнĕ.

Çак ĕçе Канаш районĕнчи халăх сучĕ августăн 27-мĕшĕнче Асхва йалне пырса пăхса тухса, Федосийа Крыловăна Уголовлă Кодексăн 142-мĕш статйин 2-мĕш пайĕ тăрăх айăпласа 8 çул хушши тĕрмене хупмала, 5 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала турĕ.

Степанăв.

ПĔЛТЕРНИ

Çентăбĕрĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре ХУЛА СОВЕЧĔН ÇУРТĔНЧЕ Шупашкар хула совечĕн финанс çекцийĕн пленумĕ пулат. Пленумра укçа-тенкĕ пухас ыйтăва сÿтсе-йаваççĕ.

Пур предприйатисенчи, учрежденисенчи тата организацисенчи финанс çекци членĕсене, комсод председателĕсене тата урам комитечĕсен активне пленума пыма чĕнеççĕ.

Пленум хыççăн кино кăтартаççĕ.

Хула совечĕ.

АЧАСЕМ „ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ"

Љовă, Петĕр, Ванљă, Лидă тата ытти шкул çулне çитмен ачасем, урамра пĕрле тĕл пулса, Љовăсен килне пытанмала выљама кĕрсе кайрĕç.

— Епĕ сире шыраканĕ пулатăп,—терĕ Љовă.—пытанăр!

— Љовă тытаканĕ пулат,—терĕ Петĕр,—айтăр пытанăпăр.

— Љовă, ес ан пăх, асту!—терĕ Лидă.

Хăшĕ сарайне, хăшĕ çенĕк айне, хăшĕ пĕренесем хыçне кайса пытанса пĕтрĕç.

— Љовă, ийу—ук!...

Љовă вĕсене часах шыраса тупрĕ. Вăл хăйсен килĕнче ăçта пытанма май пуррине лайăх пĕлет. Тÿрех унта пырат вăл. Тупат.

— Капла лайăх мар, урăхла выљăпăр. айтăр,—терĕ вăл ачасене пĕр çĕре пухса.

— Мĕнле выљăпăр, шакламла-и,—ыйтрĕ Лидă.

— Шакламла? Шакламла мĕн вăл? Ку çĕнĕ вăйă. Кĕрешÿлĕ вăйă пулат.

— Мĕнле кĕрешÿ?—ыйтрĕ Ванљă.—Çапăçмалли-и?

— Çапăçмалли-и унта, курăнат. Халĕ уничене кайатпăр. Унта лакăм-тĕкĕмсем тата пĕчĕк варашкасем пур. Есĕр пĕр çĕрте, епĕр тепĕр çĕрте пулатпăр. Вара сисмен хушăра вăрттăн вăрсем тăрăх пĕр-пĕрин патне пырса тапăнатпăр. Вара сирĕн епĕр пынине курсан, тармала пулат. Унта курăнат вăл, кам чейерех выљама пултарат, вара ун аллинче çĕнтерÿ пулат.

— Выљаса пăхар-и пĕрре? Айтăр, кайатпăр.

Љовă шухăшĕ пурин кăмăлне те килешрĕ.

— Епĕ аттерен кивĕ хаçатсем илсе тухатăп, кирлĕ пулат. Кайма хатĕрленĕр. Пĕчĕк патаксем илĕр.—терĕ Љовă.

Каштах тăрсан, Љовăпа пĕрле ачасем лăшала выљаса уничене анса кайрĕç.

— Çакăнта чарăнăр.—терĕ Љовă,—кунта вырăн лайăхрах. Çакăнта выљама пуçлăпăр.

Љовă ачасене икĕ пайа уйăрчĕ. Вăйăра мĕнле выљамаллине тепĕр хут ăнлантарса пачĕ.

— Хамăр „республиканĕçсем" пулатпăр, а есĕр—„пăлхавçăсем". Пурат-и?

Ачасем килĕшрĕç.

Љовă кашнин аллине пăшал вырăнне пĕчĕк патаксем парса тухрĕ. Самољотсем вырăнне хаçатсенчен тунă „кайăксем" валаççе пачĕ.

— Есĕр, „пăлхавçăсем", çав вар пуçне кайса выртăр, епĕр çав лапамсене кайса выртатпăр. Вара епĕр пĕр-пĕрне кураймастпăр, вăрттăн, вар-вар тăрăх пырса тапăнатпăр,—терĕ Љовă.

— Хăшĕ çĕнтерĕ,—терĕ Лидă.

— Епĕр çĕнтеретпĕр, халех сире тап-таса тăкатпăр,—терĕç „пăлхавçăсем".

„Пăлхавçăсен" самољочĕсем те, пăшалĕсем те нумайрах. Тата вĕсен йенне Лешкасран аннă ачасем те „доброволецсем" шучĕпе кайрĕç.

— Вăйă пуçланчĕ,—терĕ „пăлхавçăсем" йенче кĕрешекен Петĕр.

Икĕ йенчен те ачасем çерем çийĕн шăвăнса-шăвăнса пĕр пĕрин çине тапăнса пыма пуçларĕç. Çак вăхăтра Љовă „пăлхавçăсене" айакран çавăрса илме „бойецсене" уйăрса йачĕ.

— Астăвăр, икĕ йенчен те пĕр харăс атакăламала тăвăр. Епĕ патак çĕкленине сăнăр. Вара атакă пуçланат.

—Йурат!—терĕç „бойецсем".

Вĕсем тепĕр вар пуçĕпе кайса, „пăлхавçăсен" ури хыçне сисмен хушăра пырса выртрĕç.

— Атакă!—кăшкăрчĕ Љовă.

„Пăлхавçăсем" тĕлĕнчех çыран хĕрĕнче пытанса выртнă „республиканĕçсем" сасартăк сиксе тухрĕç. Љовă малта, патакне çĕкленĕ. „Пăлхавçăсем" хыçĕнче выртакан республиканĕçсен тепĕр отрйачĕ „пăлхавçăсен" тылне сасартăк çĕмĕрсе кĕрсе кайрĕ.

— Ур-ра!

„Пăлхавçăсем" сиссе те йулаймарĕç. Вĕсенчен пĕр „пăшал" йулмиччен тата „самољочĕсене" туртса илчĕç.

— Çĕнтерÿ пирĕнте!—терĕ Љовă.—Тавай тепре выљаса илер!

Кирек те мĕнле. темиçе вăйă выљасан та, Љовă çĕнтерет. Унăн вăйăсенчи опыт пысăк.

* * *

Љовă ашшĕ йаланах хаçатсем çырăнса илсе вуласа тăрат. Вăл хаçатри хыпарсем çинчен килйышне тата урамра каççенче пухăнса ларакан çынсене ăнлантарса парат. Уйрăмах вăл паттăр республиканĕçсем пăлхавçăсемпе мĕнле кĕрешсе пынине хытă сăнаса тăрат. Çакăн чухне ĕнтĕ, Љовă ашшĕ сăмахне тимлĕн итленĕ. Вăл та тăшмана кураймаст, вăйăра та „тăшмана" хирĕç кĕрешет.

ИВ. МОСЕЙЕВ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., султалăка 30 тенкĕ. Подписка сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 467 Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 711, ф. 6. 58×94 п. в.